Чувашская республиканская библиотека

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧЕ

1952 çул Январь 9 юнкун № 7 (8659)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ Г. М. Маленков юлташа, вăл 50 çул тултарнă ятпа саламлани (1 стр.).
СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Г. М. Маленков юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Е. Афанасьев.—Механизаторсен ăмăртăвне тивĕçлипе ертсе пымалла (2 стр.).
Валентин Урдаш.—Вăрман паттăрĕсем (2 стр.).
ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНĔР. И. Костин.—Ĕçсемпе ĕмĕтсем (2 стр.).
М. Александров.—Завком ĕçне лайăхлатассишĕн. Çуртсем тăвакан заводри профсоюз членĕсен пухăвĕнчен (2 стр.).
СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ. В. Тонышев.—Вăйлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ÿстерессишĕн; Н. Яснопольский.—Яланхи комиссисем ĕçре (3 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (3 стр.).
ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Плевен правительстви вырăнтан тухнă (4 стр.).

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ответлă тапхăр

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă виçĕ çуллăх плана пурнăçлассишĕн кĕрешсе, выльăх ĕрчетес ĕçре республикăра чылай колхозсем пысăк çитĕнÿсем турĕç, выльăх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарчĕç. Етĕрне районĕ çĕнĕ çул тĕлне пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те плана тултарса çитерчĕ. Хĕрлĕ Чутай, Красноармейски тата Комсомольски районсем лаша, ĕне тата сурăх ĕрчетмелли плана тултарнă. Колхозсенче обществăллă выльăх шучĕ çеç мар, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăç та ÿссе пырать. Выльăх ĕрчетес енĕпе малта пыракан колхозсем ĕнерен вăтам шутпа çулталăкра 1.500-шер литр е унтан та ытларах сĕт суса илеççĕ, сысна аминчен 15-шер çăвăр, сурăхран 4-шар килограмм çăм илеççĕ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç колхозсене пысăк тупăш паракан отрасль пулса пырать.

Республикăри малта пыракан колхозсен опычĕ çакна кăтартса парать: артель хуçалăхне тĕрĕс йĕркелесен, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине колхоз руководителĕсем тата мĕнпур колхозниксем тимлĕ пăхсан, колхоз укçан илекен тупăшран 50—70 процент таран выльăх-чĕрлĕх отраслĕ парать. Çапла вара, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пырасси обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарса пынинчен нумай килни курăнать.

Анчах уйрăм районсемпе колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре халĕ те çитменлĕхсем нумай. Çамрăк выльăхсене тата хăшпĕр çĕрте çитĕннĕ выльăхсене те лайăх пăхса усраман пирки выльăхсен шучĕ кирлĕ таран хăвăрт ÿссе пымасть, выльăх апатне тата выльăх витисене вăхăтра хатĕрлемен пирки выльăх-чĕрлĕхрен илекен тухăç ытла та сахал тухать. Çакă вăл хăшпĕр колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тивĕçлипе хакламанни çинчен калать. Район е колхоз выльăх ĕрчетес енĕпе юлса пырать пулсан, тĕп сăлтав обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçшĕн большевикла тăрăшманнинче.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç колхозсене пысăк тупăш паракан отрасль пулса тăтăр тесе, выльăх ĕрчетес тĕлĕшпе партипе правительство колхозсем умне пысăк та ответлă задачăсем кăларса тăратрĕç. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче вăтам шутпа пирĕн çулталăкра кашни ĕнерен 1.800 килограмран кая мар сĕт, кашни сурăхран 3,5 килограмран кая мар çăм, кашни чăхран 110 çăмарта илмелле тăвас пулать. Çак задачăсене çитес вăхăтра мар, халĕ, паян пурнăçлама тытăнмалла. Çав шутпа халĕ колхозсенче хĕллехи вăхăтра мĕнпур выльăха лайăх пăхса усрассишĕн, ама выльăхсенчен çамрăк выльăхсем нумай илме тата вĕсене пĕтĕмпех сыхласа хăварма кирлĕ условисем туса хурассишĕн, выльăх-чĕрлĕх тухăçне пĕрмай ÿстерсе пырассишĕн тимлĕ кĕрешмелле.

Выльăха хĕл каçарас ĕç—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чи ответлă тапхăр. Выльăх витисене тата выльăх апатне вăхăтра кирлĕ таран хатĕрлемен пирки иртнĕ çулта хăшпĕр колхозсенче выльăхсене хĕл каçарас ĕçре сахал мар йывăрлăхсем пулчĕç. Кăçал выльăх апачĕ тĕлĕшпе тата витесем хатĕрлес енĕпе чылай районсенче ĕçсем иртнĕ çулхинчен кăштах лайăхланнă. Анчах иртнĕ çулхи йывăрлăхсем çинчен маннă колхозсем те сахал мар. Тĕслĕхрен, Вăрмар районĕнче чылай колхозсенче утă-улăма тирпейлĕ тыткаламаççĕ. выльăх витисем те чылай колхозсенче йĕркеллĕ мар. Выльăха хĕл каçарас ĕçре çавăн пек çитменлĕхсене вăхăтра пĕтермесен, выльăх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма пулас çукки каламасăрах паллă. Выльăх-чĕрлĕхе зоотехника науки хушнă пек тăрантарса усрани, выльăх апатне тирпейлĕ тыткалани выльăхсене хĕл каçарас ĕçре пысăк вырăнта тăрать. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли уйăрса хунă апата нормăпа шутласа кашни уйăх валли тунă план тăрăх расходламалла.

Выльăха çитерме парччен апата кирлĕ пек хатĕрлени кирлĕ. Кирлĕ пек хатĕрлесен кирек мĕнле апатăн та пахалăхĕ лайăхланать. Сăмахран, улăма тураса тата пăспа е урăх майпа çемçетсе парсан, унăн усси темиçе хут пысăкрах пулать. Çавăнпа МТС-сен тракторпа ĕçлекен соломорезкăсемпе колхозсенче анлăн усă курмалла. Çавăн пек ĕçсене хакламаннипе апат усăсăр нумай пĕтет. Апата вĕтетсе тата çемçетсе панипе пĕрлех çакна та манмалла мар: апата яланах кормушкăсем çине хурса памалла, ура айне пăрахса пани пачах пулмалла мар. Кашни колхозрах, кашни фермăра апат хатĕрлеме ятарласа тунă ăшă вырăнсем, выльăх апатне пĕçерсе е çемçетсе хатĕрлемелли кухнясем пулмалла.

Хĕллехи вăхăтра выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс тăрантарса усранипе пĕрлех, выльăха вăхăтра кирлĕ таран шăварса тăни те пысăк вырăн йышăнать. Çав ыйту çине тивĕçлипе пăхман пирки час-часах выльăхсем начарланаççĕ. Зоотехника науки хушнă пек выльăха талăкра виç хутран кая мар шăварма шыв нумай кирлĕ. Çавăнпа кашни колхозрах выльăхсене шăвармалли вырăнсем, унта пымалли çулсем, шыв валашкисем кирлĕ таран пулмалла. Малта пыракан колхозсенче выльăхсене ăшăтнă шыв парса шăвараççĕ. Çапла туни уйрăмах сăвакан ĕнесемшĕн, ама выльăхсемшĕн ÿсăллă. Выльăх фермисенче шыва ăшăтса памалла тăвасси малашне кашни фермăрах йăлана кĕнĕ ĕç пулма тивĕçлĕ.

Январь тата çитес февраль уйăхĕсенче ĕнесем пăруласси массăллăн пулать, путексем нумайланаççĕ. Çак тапхăр çамрăк выльăхсене йышăнса лайăх сыхласа хăварассине татса парать. Пĕтĕм выльăха ăшă та типĕ тата çутă сурт-йĕрсенче усрамалла. Пĕтĕ тата çамрăк выльăхсем валли çавăн пек çуртсем пуршех кирлĕ. Çамрăк выльăхсем валли ятарласа тунă ăшă çуртсем çук пулсан, вĕсем валли вăхăтлăха ăшă çуртсем уйăрса памалла.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх шутне сыхласа хăварас ыйту халĕ колхоз правленийĕсемпе пуçламăш парторганизацисемшĕн тĕп вырăнта тăмалла. Выльăх чирлени е вилни пулсан, кашни расрах çавăн пек инкек сăлтавĕсене тупса палăртмалла, ун çинчен правлени ларăвĕсенче сÿтсе явмалла, айăплисене тивĕçлĕ ответ тыттармалла. Обществăлла выльăха вĕлерсе, вырăнсăр салатса пĕтерни обществăллă хуçалăха сиен кÿрекен, колхоза хирĕçле ĕç пулса тăрать.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ăнăçлăхне, выльăхсене йĕркеллĕ хĕл каçарас ĕçе выльăх фермисенче ĕçлекен кадрсем татса параççĕ. Çавăнпа выльăхсем патĕнче ĕçлекенсене суйласа илес, фермăри ĕçе организацилес, ĕçре обезличкăна пĕтерес ыйтусем пысăк вырăнта тăраççĕ. Çав ыйтусен пĕлтерĕшĕ хĕллехи вăхăтра тата пысăкрах пулни пуриншĕн те паллă Çавăнпа та хĕллехи вăхăтра выльăх-чĕрлĕхсене пăхса усрас ĕçе йĕркелеме колхоз руководителĕсен уйрăмах тăрăшмалла, колхоз председателĕсен фермăсенче кашни кунах пулса, выльăхсем патĕнчи работниксен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла, ферма работникĕсене лайăхрах ĕçлеме пулăшса пымалла.

Вырăнсенчи ялхуçалăх органĕсен зоотехниксемпе ветеринари работникĕсен ĕçне халĕ вихçанхинчен ытларах вăйлатмалла. Зоотехникăпа ветеринари работникĕн хайсене çирĕплетсе панă колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарма пулăшмалла МТС руководителĕсен выльăх ферминчи ĕçсене май пур таран, халĕ, уйрăмах апат хатĕрлес ĕçе ытларах механизацилеме тăрăшмалла.

Колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас ĕç—пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Парти организацийĕсем енчен çак ĕçе куллен тĕрĕслесе, палăртнă çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пыма тивĕçлĕ мерăсем йышăнни кирлĕ.

Георгий Максимилианович МАЛЕНКОВ юлташа

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕпе ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ Сире, Ленинăн шанчăклă ученикне тата Сталин юлташăн соратникне, Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятельне, 50 çул тултарнă кун ячĕпе хĕрÿллĕ саламлаççĕ.

Эсир хăвăрăн пĕтĕм ăнланулла пурнăçăра Ленин — Сталин партийĕн аслă ĕçне, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçе патăр.

Совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕ пулса, Эсир Коммунистсен партийĕ Сирĕн умма кăларса тăратнă задачăсене чыслăн пурнăçласа пырса, Эсир халăхшăн мĕнле ĕçлемеллине хавхалантаракан ĕç тĕслĕхĕ кăтартатăр.

Партипе государство ĕçĕнче пур вырăнсенче те ответлă порученисене пурнăçласа, Эсир, пирĕн аслă учительсем Ленинпа Сталин кăтартса панă çулпа çирĕп пырса, Аслă Отечественнăй вăрçăра хăвăра тивĕçлĕ тимлĕхпе тата хастарлăхпа пирĕн Тăван çĕршыв этемлĕх тăшманĕсене çĕнтерес ĕçе туптарăр.

Сире, пирĕн тÿс тата юлташ, хаклă Георгий Максимилианович, нумай çул хушши пурăнма сывлăх сунатпăр, хамăрăн социализмлă аслă Тăван çĕршывшăн, коммунизм çĕнтерессишĕн малашне те ăнăçлă ĕçлеме ырă сунатпăр.

ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ. СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

Г. М. Маленков юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн секретарĕ тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ Г. М. Маленков юлташ 50 çул тултарнă май тата вăл Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕ умĕнче уйрăмах пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине шута илсе, Георгий Максимилианович МАЛЕНКОВ юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1952 çулхи январĕн 7-мĕшĕ.

Плана ирттерсе тултараççĕ

НОВОСИБИРСК. Новосибирскри малта пыракан предприятисем çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче производство планне ирттерсе тултараççĕ.

Металлурги завочĕн коллективĕ производство программине кашни сменăра ăнăçлă тултарать. Тимĕре хĕртсе прокат тăвакан цех коллективĕ, стахановла вахтăна тăрса, январĕн малтанхи пилĕк кунĕнче плана 104 процент тултарнă.

Çĕр мамăк пир-авăрĕ тĕртекен комбинат çĕнĕ çул тĕлне планран ирттерсе 1.309 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Комбинат январĕн малтанхи пилĕк кунĕнче кашни талăкра продукци туса кăлармалли графика ирттерсе тултарса пынă.

СКОПИН (Рязань облаçĕ). «Октябрьуголь» трестри 44-мĕш тата 45-мĕш шахтăсем çĕнĕ çул пуçланнă кунсенче кашни талăкра çĕр кăмрăкĕ кăлармалли задание ирттерсе тултарса пыраççĕ.

44-мĕш шахтăри горняксем иртнĕ çулта планран ирттерсе 11 эшелон çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Çĕнĕ çул пуçланнă кун вĕсем задание 20 процент ирттерсе тул[illegible]

ПЕТРОЗАВОДСК. Карело-Финн ССР-ĕнчи предприятисен коллективĕсем 1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

Целлюлозăпа хут комбиначĕ кашни кунах планран ирттерсе продукци туса кăларать. Сортавалăри пустав фабрики иртнĕ çулхинчен чылай тухăçлăрах ĕçлет.

Январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Новатор-текстильщиксен опытне çăмăл промышленноçăн пур предприятисенче те сарассишĕн

Январĕн 7-мĕшĕнче СССР Çăмăл промышленность министерствин коллегийĕ Купавинăри çÿхе пустав тĕртекен фабрикăра ĕçлекен Сталинла премин лауреачĕсем Мария Рожневăпа Лидия Кононенко панă паха сĕнÿ çинчен сÿтсе явнă.

М. Рожневăпа Л. Кононенко пуçарнипе Купавинăри фабрикăра 1952 çулхи плана ăнăçлă тултарма резервсем тупассишĕн тата çав резервсемпе усă курассишĕн социализмлă ăмăрту анлă саралнă. Фабрика цехĕсемпе бригадăсенче производствăллă канашлусем пулнă. Канашлусем ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерме, чĕртаварпа материалсене перекетлеме, пĕррemĕш сортлă продукци ытларах туса кăларма чылай майсем пуррине палăртнă. Фабрикăра ĕçлекенсем паха сĕнÿсем 500 яхăн панă.

Новаторсен сĕнĕвне ырласа, Купавинăри фабрика коллективĕ кăçал перекетлесе хăварнă чĕртавартан планран ирттерсе 20 пин метр пир-авăр тĕртсе кăларма, пĕррemĕш сортлă пир-авăр хисепне 99,5 процента çитерме, продукцин хăйне ларакан хакне план тăрăх палăртнинчен чылай ытларах чакарма, ĕç пахалăхне пур енĕпе те лайăхлатса пыма йышăннă.

Коллеги ларăвĕнче М. Рожневăпа Л. Кононенко хăйсем илнĕ обязательствăсем çинчен каласа панă. Вĕсем илнĕ обязательствăсене январĕн пирвайхи кунĕсенчен пуçласах ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ.

Министерство коллегийĕ М. Рожневăпа Л. Кононенко панă сĕнÿ паха пулнине палăртнă, вĕсем пуçарнă ĕçе çăмăл промышленноçăн пур предприятийĕсене те анлă сарма йышăннă.

Çав ларурах министерство коллегийĕ Ивановăри меланжевăй комбинатра ĕçлекен мастер помощникĕ А. Кучерова тата çав предприятири машинăсене юсакан бригада бригадирĕ М. Александров пуçарнă ĕç çинчен сÿтсе явнă. Вĕсем, пĕр шухăшлă пулса ĕçлеме договор туса, ытти мастер помощникĕсене, машинăсене юсакансене тата технологсене пĕрле ĕçлесе машинăсен тухăçлăхне ÿстерсе пырассишĕн кĕрешме чĕннĕ.

Министерство коллегийĕ А. Кучеровăпа М. Александров паха ĕç пуçарнине ырланă, çăмăл промышленноçăн пур предприятийĕсенче те машинăсене юсакансемпе машинăсемпе ĕçлекенсем тачă çыхăнса ĕçлессине сарса пыма йышăннă. (ТАСС).

Çĕнĕ çулти хисеплĕ заказсем

СТАЛИНО. Паян Макеевкăри завод Куйбышева чугун трубасем 8 вагон ăсатнă. Çав трубасемпе Сталинград гидроузелне тата Каховкăри гидроэлектростанцие тунă çĕрте водопровод тума усă курмалла. Çĕнĕ çул умĕн завод «Куйбышевгидрострой» валли продукци нумай ăсатнă.

Хисеплĕ заказсене срокчен пурнăçлассишĕн ăмăртса, металлургсем продукци сехет графикĕ тăрăх туса кăлараççĕ, машиностроительсем — машинăсене узелсем тăрăх пухаççĕ, çапла ĕçленипе машинăсене нумай хăвăртрах пухса хатĕрлеççĕ.

ЧЕЛЯБИНСК. Паян Колющенко ячĕпе тăракан çул тунă çĕрте ĕçлемелли машинăсем тăвакан завод Куйбышеври гидроэлектростанци строителĕсене 5 бульдозер ярса панă.

Çĕнĕ çул пуçланнă кунсенче туса хатĕрленĕ машинăсене Сталинград гидроэлектростанцине тăвакансем патне те ярса панă.

Завод коллективĕ коммунизмăн аслă стройкисене валли пĕррemĕш кварталта тумалли машинăсене пурне те январь уйăхĕнче туса пĕтерсе ярса пама йышăннă.

ВЛАДИМИР. Ковроври экскаваторсем тăвакан заводра коммунизмăн аслă стройкисен мĕнпур заказĕсене срокчен пурнăçласси йăлана кĕнĕ.

Куйбышеври тата Сталинградри гидроэлектростанцисене тăвакансенчен пĕррemĕш кварталта çĕр чавмалли машинăсем туса пама заказ илнĕ хыççăн, экскаватор тăвакансем çĕнĕ çул пуçлансан пĕррemĕш эрне хушшинче машинăсене туса пĕтерсе ăсатнă.

Кăçал аслă стройкăсене ярса панă çĕр чавмалли машинăсем иртнĕ çулта тунă машинăсенчен чылай урăхла. Машинăсене вырăнтан вырăна куçарнă чухне ĕçлекен пайсене çĕнетнĕ. Экскаватор куркине шăратса сыпăçтарас вырăнне пĕтĕмпех шăратса тунă, хăвăрт çийĕнекен шестернясене лайăх хытарнă металран тунă.

Январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС).

Çеçенхирсемпе пушхирсенче экспедицисем ĕçлеççĕ

Гидротехника тата мелиораци енĕпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ коммунизмăн аслă стройкисен районĕсене экспедицисем янă. Халĕ ĕнтĕ экспедицисен ĕç итогĕсене тунă.

Ученăйсен ушкăнĕ Каспи тинĕсĕ çывăхĕнчи айлăм вырăнта—Терекран пуçласа Атăл патне çитиччен сарăлса выртакан районта ĕçленĕ. Ку вырăнсенче часах ĕнтĕ шăварса тырпул ÿстермелле тума тата шыв илсе пымалла тума тытăнаççĕ. Халиччен пушхир пек пулнă районсенче курăк лайăх ÿсекен тата тырпул вăйлă пулакан районсем пулса тăраççĕ.

Экспедици Ногайски çеçенхирсенчи, Хура çĕрсем çинчи тата Сарпински айлăмри вырăнсене пур енĕпе те тĕпчесе тухнă. Çак районсене çĕнетсе улăштармалли план туса хатĕрленĕ.

Ученăйсен тепĕр ушкăнĕ Аму-Дарья тĕмиçе пая уйрăлса юхакан вырăнпа, Куня-Дарья ятлă тÿрем вырăна, Хĕвеланăç Туркменире Узбой районне сăнаса пăхнă. Кунта часах тĕрлĕрен ÿсентăрансем ешĕрсе ÿсекен вырăнсем пулса тăраççĕ. Экспедици çак районсенче çĕр айĕнче шыв пуррипе çуккине, тăпра мĕнлине пăхса тухнă. Экспедици кунта тырпул акса тума юрăхлă пысăк вырăнсем пуррине палăртнă.

Кăçал институт тата тепĕр пысăк ĕç туса ирттерет. Туркменири тĕп канал пулмалли вырăнта лабораторисенче тата производство условийĕсенче пушхирти хăйăра купаласа плотинасем тумалли майсене тупмалла. Плотинасем пулмалли вырăна хăйăр купаланă чухне тăварлă кÿлĕсенчи шывпа усă курма шутлаççĕ. Кун пек плотинасем туни гидротехника историйĕнче халиччен нихçан та пулман. (ТАСС).

Таджикистанра тĕштырăсем акаççĕ

СТАЛИНАБАД, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Микоянабад, Регарски, Шахринаусски, Явански районсенчи колхозсем тата Куляб облаçĕнчи чылай колхозсем çурхи тĕштырăсене акма тытăннă. Вĕсем çак кунсенче 1.200 гектар акнă.

Куляб облаçĕнче ăшă çанталăк тăрать. Облаçри колхозсем йĕтĕн акма тытăннă.

Ăратлă выльăхсем сутса пысăк тупăш илнĕ

АЛМА-АТА, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС) Келлеровски районти (Кокчетав облаçĕ) «Борьба за новый быт» колхоз çулталăкри отчета туса пĕтернĕ. Колхоз ăратлă выльăхсем сутса чылай тупăш илнĕ. Кокчетав облаçĕнчи колхозсем иртнĕ çулта ăратлă выльăхсем сутса миллион тенкĕ ытла тупăш тунă.

Казахстанри колхозсенче ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсем 700 яхăн шутланаççĕ. Вĕсем Казахстанри, Киргизири, Туркменири тата Узбекистанри колхозсене ăратлă лашасем, ăратлă вăкăрсем тата сыснасемпе сурăхсем 1950 çулхинчен икĕ хут нумайрах сутнă.

Халĕ республикăра кустанайски ăратлă лаша, алатаусски тата казахски шурă пуçлă ĕне ĕрчетекен, шутра йышши шурă сысна, вĕтĕ çăмлă казахски сурăхсем, архаромеринос тата советски меринос сурăхсем ĕрчетекен вуншар ферма организациленĕççĕ.

Кĕскен

☆ Сельхозгиз «За ежегодное плодоношение колхозных садов» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Кĕнекене Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз садовочĕ Смирнов çырнă. Вăл сад ĕрчетес тĕлĕшпе 50 çул ĕçленĕ. Смирнов кунпа улттăмĕш кĕнеке çырса пичетлесе кăларнă.

☆ Украина ССР Ялхуçалăх министерстви 1952 çулта республикăри вуншар МТС-сенче юсамалли тракторсене çулталăк хушшинчи пур вăхăтра та юсамалла тăвать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Механизаторсен ăмăртăвне тивĕçлипе ертсе пымалла

Çĕмĕрле МТС-ĕнчи паллă комбайнер. Г. Тюкин юлташ парторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕнче çапла каларĕ:

— Комбайнерсем хушшинче нимĕнле ăмăрту та пулман. Механизаторсем пĕрпĕринпе договор туса ĕçлемеççĕ. Хăшпĕрисем харпăр хăй çине обязательствăсем илеççĕ, анчах вĕсене мĕнле пурнăçланине никам та пĕлмест. Тахçанах, хĕрÿ ĕç вăхăчĕсенче, пире кашни пилĕк кунта кам мĕнле ĕçленине пĕлтерсе тăратчĕç. Кăçал вара вăл та пулмарĕ.

И. Степанов тракторист çапла хушса хучĕ:

— Ытти бригадăсен ĕçне кăна мар, харпăр хăй бригадăри механизаторсем мĕнле ĕçленине те пĕлместĕп. Пĕр-пĕрне эпир çу касса та кураймастпăр, кам мĕнле ĕçлени çинчен пире никам та пĕлтермест.

Социализмлă ăмăртăва ертсе пырасси Çĕмĕрле МТС-ĕнче çав тери начар пулса пырать. Ахальтен мар ĕнтĕ партбюро секретарĕ (вăлах директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ) Г. Журналов юлташ отчетлă докладра кун пирки нимĕн те калаймарĕ. Вăл социализмлă ăмăртăвăн пĕлтерĕшĕ çинче ытларах чарăнса тăчĕ, ăна вара вырăнти тĕслĕхсемпе çирĕплетме пултараймарĕ.

МТС çултаякри ĕç планне 81,5 процент кăна тултарнă. Договорта кăтартнă условисене пĕр колхоза та пурнăçламан. Пĕр бригада та задание тултармасть.

МТС-ра лайăх ĕçлекен механизаторсем çук темелле мар. Уйрăм механизаторсем вăйлă тырпул пухса кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Парти кандидачĕ Г. Тюкин комбайнер кашни çул пуха тĕслĕхĕсем кăтартать. Вăл 100 гектар вырăнне 369 гектар вырса, В. Бобров комбайнер 344 гектар вырса кĕртнĕ. Ф. Яковлев тракторист Г. Долгов юлташпа пĕрле ĕçлесе 506 гектар вырăнне 1.080 гектар, Е. Иванова Н. Саеров юлташсем пĕрле 1.008 гектар сухаланă. Вĕсен лайăх тĕслĕхне ытти механизаторсем патне çитерес, çапла вара МТС-ра пĕтĕмĕшпе çĕклену тăвас тесе никам та тăрăшман.

Отчетпа суйлав пухăвĕ тĕлне Г. Журналов юлташ пулăшнипе кам мĕн чухлĕ тырпул тарнине кăтартакан цифрăсем сырса илнĕ, анчах та обязательствăра палăртнă цифрăсене илсе танлаштарса пăхман.

— Эпир социализмлă ăмăрту йĕркелетпĕр тесе ятне кăна тунă,— тесе йышăнчĕ вăл юлашкинчен.

Уйрăм коммунистсем ĕç нормисене тата колхозпа тунă договор условийĕсене мĕншĕн пурнăçламаннипе партбюро пачах интересленмен. Сăмахран, Н. Андрюшкин коммунист ертсе пыракан 5-мĕш бригада иртнĕ çулсенче малти вырăнта пынă пулнă. Юлашки икĕ çул хушшинче бригада плана тултараймасть. Çак бригада мĕншĕн кая юлнин сăлтавне парторганизаципе администраци тĕпчесе вĕренмен.

Социализмлă ăмăртăва ертсе пырасси çынсемпе куллен ĕçлеме кирлине пĕлтерет. Партбюро вара çак чăнлăха асра тытмасть. Парторганизаци трактор бригадисем çумне агитаторсем уйăрса çирĕплетнĕ те, вĕсен ĕçне тĕрĕслеме маннă. Трактор бригадисенче каласусем ирттерес, механизаторсене хаçат-журнал вуласа парас ĕçсем хăй тĕллĕн тенĕ пек пулса пынă. Пĕр бригадăра та боевой листоксемпе çиçĕм-хаçатсем кăларман.

— Пĕррехинче Журналов юлташ эпĕ ĕçленĕ çĕре—Кăмаша хирне пычĕ. Эпĕ—коммунист, вăл манăн хушамата астăвать иккен. «Эсĕ кунта ĕçлетĕн-и-ха?» ыйтрĕ вăл. «Кунта-ха», ответлетĕп. Тата иквиç сăмах хушнă хыççăн Журналов юлташ пăрахрĕ те утрĕ. Эпĕ мĕнле ĕçлетĕп, мана мĕн çитмест—ку ăна интереслентермерĕ,—каласа пачĕ А. Оськин юлташ.

Обязательствăсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеменни, коммунистсене партиллĕ порученисем паманни, политикăллă-массăллă ĕçе япăхтарни чылай коммунистсен ĕçри ответлăхне чакарнă. Çавна пула партбюро хăйĕн ларăвĕсенче партиллĕ-политикăллă ыйтусем вырăнне, ĕç дисциплинине пăсакан уйрăм коммунистсен ĕçĕсене пăхса тухса вăхăта ытларах ирттернĕ.

Партбюро тата унăн секретарĕ профсоюз тата комсомол организацийĕсен ĕçне кирлĕ пек ертсе пыман. Çавна пула профсоюзпа комсомол организацийĕсен ĕçĕсем чылай япăхланă.

Машина-трактор паркĕ çултан-çул пысăкланса, вăйланса пырать. Анчах механизаторсен техникăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе МТС-ра нимĕн те тумаççĕ.

МТС-ра Халĕ трактористсемпе ялхуçалăх машинисемпе пĕр çĕрте ĕçлеççĕ. Политикăллă-массăллă ĕçе анлă сарма питĕ паха майсем пур. Анчах çак майсемпе тивĕçлипе усă курни çук. Парторганизаци политинформацисем ирттерес, механизаторсене хаçат-журнал вуласа парас, вĕсемпе политикăллă темăсем тăрăх каласусем ирттерес, боевой листоксем кăларас ĕçе йĕркелемен. Наглядлăй агитаци те тивĕçлĕ вырăнта мар. Партбюро секретарĕ кăтарту хăми хăçта вырнине те пĕлмест. Хĕрлĕ кĕтесе Хисеп хăми туса çакнă. Анчах вăл хисеп хăми мар, фотоÿкерчĕксем çакмалли вырăн пулса тăнă.

Чылай участоксенче ĕç тухăçлăхĕ начар. Тракторсен кăкармалли инвентарьсем юсакан узелта виçĕ коммунист ĕçлет. Вĕсем машинăсене февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне юсаса çитерме тăрăшаççĕ. Çав хушăрах тракторсем юсакан узелта ĕç начар пырать. 1951 çулта 17 трактор юсаса пĕтермелле пулнă пулсан, 8 трактора кăна ĕçе юрăхлă тунă. Кунта ĕçлеме тивĕçлĕ Семенов, Перов, Савков коммунистсем ку таранчен те юсав ĕçне тытăнман.

Пухура тухса калакан Н. Андрюшкин, Г. Тюкин, И. Степанов, И. Тупицын, В. Морозов юлташсем социализмлă ăмăртăва йĕркелесе ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшакан паха сĕнÿсем пачĕç.

Е. АФАНАСЬЕВ.

Завком ĕçне лайăхлатассишĕн

(Çуртсем тăвакан заводри профсоюз членĕсен пухăвĕнчен)

Куславккари çуртсем тăвакан завод коллективĕ иртнĕ çулта сахал мар ÿсĕмсем турĕ. Пĕлтĕр, 1950 çулхипе танлаштарсан, коллектив государствăна 12 пин тăваткал метр ытларах çурт панă. Продукци пахалăхĕ те лайăхланнă.

Сдельнăй майпа ĕçлекен рабочисенчен 84 проценчĕ—стахановецсемпе ударниксем. Отчетлă тапхăрта 85 çын икшер çулхи е ытларах тапхăрти нормăна тултарнă. Ĕçри ÿсĕмсене ытти тĕслĕхсемпе те кăтартса пама пулать.

Анчах та профсоюз организацийĕн заводри комитечĕ тимлĕрех ĕçленĕ пулсан, коллектив тата та пысăкрах ÿсĕмсем тума пултарнă. Завком ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Профсоюз организацийĕн иртнĕ конференцийĕ çав çитменлĕхсене тĕплĕ уçса кăтартрĕ.

Завком социализмлă ăмăртăва конкретлă та оперативлă ертсе пыман. Социализмлă ăмăртăва ертсе пырас ĕçри йăнăшсем завод туса кăлармалли продукцин номенклатурине пурнăçламаннинче те, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарманнинче лайăх палăрчĕç. Çав йăнăшсене пулах ĕнтĕ коллектив ВЦСПС-па СССР Çĕр кăмрăк министерствин куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тытса тăрайман.

Хăшпĕр рабочисем социализмлă обязательствăсем те илмен. Завком ăмăрту итогĕсене вăхăтра туса пыман. Заводăн хăшпĕр уйрăмĕсенче социализмлă ăмăрту итогĕсене çырмалли хăмасем çине уйăхĕ-уйăхĕпе нимĕн те çырман. Уйăхри ăмăрту итогĕсене ытла та кая юлса пăхса тухни ĕçре пысăк чăрмав кÿнĕ, йăнăшсене вăхăтра палăртма чăрмантарнă. Завод комитечĕ рабочисен вăйне коллективлă договора тивĕçлипе пурнăçлама мобилизацилеймен.

Оборудованипе тĕрĕс усă курманнине, ĕçе тĕрĕс йĕркелеменнине пула завод пĕр тикĕс ĕçлемен. Уйăх малтанхи пайĕнче хăвшарах, уйăх вĕçĕнче ытла хăвăртлăхпа ĕçлеме тивнĕ. Çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе завком хăйĕн пуçарулăхне кăтартман.

— Завод директорĕ М. Шейнман юлташ,— тет А. Просуков юлташ,— ĕç законне пăсать. Çавна пула рабочисен тепĕр чухне кану вăхăтĕнче ĕçлеме тивет. Завком председателĕ çак çитменлĕхе пĕлсе тăнă çĕртех ĕç законне сыхлама мерăсем йышăнмасть.

Столярнăй цехри слесарь К. Кочетков юлташ завкома рационализаторсемпе ĕçлеменшĕн хытă критикăларĕ. Çулталăк хушшинче рационализаторсемпе пĕр канашлу та, пĕр пуху та ирттермен. Производствăна кĕртме йышăннă рационализаторла сĕнÿсенчен 12-шне паян куна та пурнăçа кĕртмен. Çав сĕнÿсене производствăна кĕртме заводра пур майсем те çителĕклĕ.

Электростанци начальникĕ А. Кондаков юлташ завкома рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма тăрăшманшăн критикăларĕ, завкомăн çĕнĕ составне культурăллă-массăллă ĕçе вăйлатма сĕнÿ пачĕ.

Конференци çĕнĕ завкома çирĕп наказ парса хăварчĕ. Завод комитечĕн цехкомсемпе профгруппоргсене ертсе пырас ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла. Комиссисен ĕçне тĕпрен вăйлатни кирлĕ. Пухусемпе производствăллă канашлусен пĕлтерĕшне ÿстермелле, производство новаторĕсен меслетне куллен сарса пымалла.

Конференци, профорганизаци ĕçне япăхтарнине шута илсе, А. Мошков юлташа завкомăн çĕнĕ составне суйламарĕ. Завком членĕсем пулма производствăра малта пыракан юлташсене суйланă. Вĕсем хушшинче—хăма çуракан цехри резчица А. Леванова, столярнăй цехри станочница М. Мясникова, çуртсем тăвакан цехри сборщица, район Совечĕн депутачĕ Е. Фадеева, механик Н. Васин, цех начальникĕ Ф. Павлов юлташсем.

М. АЛЕКСАНДРОВ.

Сăвăсемпе поэмăсен сборникĕ

Чăвашгосиздатăн илемлĕ литература секторĕ çак кунсенче Александр Алга сăвăсемпе поэмăсен пуххине кăларнă, ăна «Çуралнă çĕршывра» тесе ят панă. Сборнике поэт юлашки вăхăтра çырнă вăтăр ытла сăвă тата поэмăсем кĕнĕ.

Кĕнеке тиражĕ — 2.000 экз., хакĕ 2 т. 90 пус.

Ставрополь крайĕ. Либкнехт районĕнче сÿс тума канатник акса ÿстерме тытăннă. Ку вăл Ставрополь крайĕшĕн çĕнĕ культура. Канатник сÿсĕ питĕ çирĕп, Большой Зеленчук ятлă юханшыв сывăхĕнче канатник сÿсĕ тăвакан завод лартнă. УКЕРЧĕК ÇИНЧЕ: канатник сÿсне типĕтме çакнă.

Г. АРКЕЛЬЯН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Ĕçсемпе ĕмĕтсем

Иртнĕ çул хĕлле Муркаш ял Советĕнчи колхозсем пĕр колхоза пĕрлешрĕç. Халĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз—районти пысăк колхозсенчен пĕри. Вăл 560 хуçалăха пĕрлештерсе тăрать, унăн çĕр лаптăкĕ пĕтĕмпе 3.500 гектар ытла.

Пĕрлешнĕ колхозра чи малтан кадрсене суйласа илесси çине тимлĕ пăхрĕç. 15 уй-хир бригадинчен 9 уй-хир бригади тата 18 çынтан строительство бригади организацилерĕç. Пуçламăш парторганизаципе пĕрле уй-хир бригадисене ертсе пыма тата колхоз производствинчи опыт тăвакан участоксенче ĕçлеме коммунистсене, комсомолецсене тата партире тăман пултаруллă колхоз членĕсене уйăрчĕç. Колхоз членĕсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç чылай вăйланчĕ. Çакна май ĕç дисциплини те çирĕпленчĕ. Иртнĕ çул колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 15,5-шер центнер тĕштырă тухрĕ. И. Магаев тата И. Слаский юлташсем ертсе пыракан уй-хир бригадисем кашни гектартан 18-шар центнер ыраш, 20-шер центнер çурхи тулă пухса кĕртрĕç. Уйрăмах кантăр ăнса пулчĕ. Гектартан 6 центнера яхăн кантăр сÿсĕ, 7-шер центнер кантăр вăрри тухрĕ. А. Столбов юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади кашни гектартан 7-шер центнер кантăр сÿсĕ, 9,26-шар центнер кантăр вăрри туса илчĕ. Çак хаклă культурăна государствăна планпа палăртнинчен чылай ытларах панă. Çавăншăн государство 50 пин тенкĕ укçа, 175 центнер тулă, 5 тонна турантă, 7 центнер кантăр çăвĕ панă.

Колхоз Тăван çĕршыв умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарса пырать. Кăçалхи пĕрремĕш кварталшăн аш-какай, çу тата çăмарта памалли плана иртнĕ çултах тултарнă.

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче кăтартнă фондсем валли çителĕклĕ тĕштырă уйăрса хăварнă хыççăн колхозниксене кашни ĕçкунĕ çине 2,5-шер килограмм тĕштырă тата çителĕклĕ выльăх апачĕ валеçсе панă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне те тултарнă. Халĕ колхоз фермисенче 213 ĕне, 430 сурăх, 520 сысна усраççĕ. Ку тарана çитиччен колхоз ĕнисем пăруласа пĕтернĕпе пĕрех.

Колхозра лашасен шучĕ 300 ытла. Кăçал 45 кĕсре хăмламалла. Вĕсене уйрăм пăхаççĕ, ирçе çула кÿлмеççĕ. Конюхсем лашасене тăрăшса пăхаççĕ.

Вак колхозсем пĕрлешсе пысăкланни обществăллă хуçалăха малалла вăйлă тĕреклетме май пачĕ. Иртнĕ çул обществăллă çурт-йĕрсем туса лартнă, ялхуçалăх машинисем чылай туяннă. Ут хатĕрĕсем, урапа-çунасем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Колхоз урапа-çуна тăвакан мастерской тума хатĕрленет. Электричествăпа авăн çапнă çĕрте анчах усă курнă пулсан, малашне электричество вăйĕпе хăма çурмалли рама ĕçлеттермелле тăваççĕ, фермăри ĕçсене механизацилеççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем умне чыслă задача лартрĕç. Кашни гектартан 18-шар центнер тĕштырă, 10-шар центнер кантăр вăрри, 7-шер центнер кантăр сÿсĕ туса илмелле.

Артель кашни çулах çĕре çĕнетсе пырать. Кăçал уя 13 пин тонна тислĕк, 5.000 лав торф, 2.000 лав кÿлĕ юшкăнĕ кăлараççĕ, 60 тонна минераллă удобрени кÿрсе килеççĕ. Паянхи куна уй-хире пилĕк пин тонна тислĕк, икĕ пин лав торф тата 1.500 лав юшкăн кăларнă. Вырăнти удобренисем турттарнă çĕрте куллен 50—60-шар лаша ĕçлет.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Иртнĕ çул кашни ĕнерен 1.440-шер литр сĕт суса илнĕ. Кашни амаран 14-шар сысна çури илсе тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтернĕ. В. Андреева свинарка 5 сысна аминчен пĕр çул хушшинче 150 çура пăхса илнĕ. Кăçал колхозниксем кашни ĕнерен 1.500-шер литр сĕт, кашни сысна аминчен 16-шар çура, кашни сурăхран—3,5-шер килограмм çăм, кашни чăхран 100-шер çăмарта илессишĕн кĕрешеççĕ. Иртнĕ çул обществăллă выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутса 200 пин тенкĕ тупăш илнĕ пулсан, кăçал 350 пин тенкĕ илме пăхнă.

Кăçал строительство валли пин кубометр йывăç хатĕрлеççĕ, ăна çуна çулĕ пĕтиччен турттарса кăлараççĕ. Автомашинăсем валли гараж, 700 пус хупса усрама икĕ выльăх вити, 20 метр тăршшĕ кĕпер тата 600 тонна çĕрулми хывма хранилище тăваççĕ.

И. КОСТИН.

Ĕçе вăйлатни кирлĕ

ОКТЯБРЬСКИ. Пĕрлешсе пысăкланнă «Новая жизнь» колхозра çуракине пĕлтĕр те начар хатĕрленсе тухрĕç, çавна пула тырпул тухăçлăхĕ пысăк пулаймарĕ. Колхоз руководителĕсем иртнĕ çулхи çитменлĕхсене шута илмен, тырпул тухăçлăхне ÿстерес шутпа нимĕнле улшăну та тума шутламаççĕ. Кăçал та иртнĕ çулхи пекех çуракине япăх хатĕрленеççĕ.

Тырпул тухăçлăхне ÿстерес тесен, паха вăрлăхсăр пуçне, удобренисем кирлĕ чухлĕ хатĕрлемелле. Çак ĕçе те колхозра тивĕçлипе хакламаççĕ. Уй-хире 9 пин лав тислĕк кăлармалла, халĕ мĕн пурĕ те 520 лав кăна кăларнă. Вырăнти ытти удобренисем те хатĕрлемеççĕ.

Чылай колхозсенче колхозниксем агрозоотехника курсĕсенче вĕренеççĕ, вăйлă тырпул çитĕнтерме, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕх усрама çирĕп пĕлÿ илеççĕ. Çак паха ĕçе те «Новая жизнь» колхозра йĕркелеме шутламаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен вĕренес кăмăлĕ пысăк, анчах вĕренĕве йĕркелеме тăрăшакансем çук.

Обществăллă ĕçсене çирĕп план тăрăх туса пыманни хытă чăрмантарать. Сăмахран, уй-хир бригадирĕсем гектартан мĕн чухлĕ тырă туса илессишĕн кĕрешмеллине те пĕлмеççĕ.

Хамăр республика ялхуçалăхĕ умне партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçлама колхозри парторганизаци колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилеме тăрăшмасть, массăллă ăнлантарулă ĕçе начар туса пырать.

В. ТРОФИМОВ.

Вăрман паттăрĕсем

III.

Кам кăна юратмĕ вăрман чăтлăхĕнчи хĕллехи ире! Тул çутăлса çитес умĕн унта та кунта кĕмĕл шăрçа ярăмĕсем çака-çака тухнă хурăнсем хушшинчен иртсе пынă чух вăрманти тутлă сывлăша кăкăр тулли сывлăс килет.

Лăп та шăп çакăн пек илемлĕ вырăнтан иртсе пырать те ĕнтĕ Петр Петрович Глупов коммунист бригади. Малта пыракан Василий Яковлев, аллă çулалла çитнĕскер, юлташĕсене хĕрсех чăваш юмахĕсене каласа парать:

— Пирĕн Шăхасан таврашĕнче ĕлĕксенче тĕлĕнмелле халапçă пулнă. Сикки тесе чĕннĕ ăна ята. Эпĕ те сире çавăн халапне каласа парам-ха эппин.

«Çав-çав тĕлте, çав тĕлте, çĕрпе пĕлĕт хушшинче, сар хĕвел çĕршывĕнче, пĕчĕк çырма хĕрринче, сĕм вăрман чăтлăхĕнче пĕр пăхаттир пурăннă. Çырма-паттăр тенĕ ăна. Еккe кайсан çак паттăр çырмари шыва тумлам юлмиччен ĕçсе яма, кирлĕ пулсан çĕнĕрен тултарма е çырмине пÿлсе урăх çулпа чупт арма пултарнă. Çырма-паттăр çумĕнче Юман-паттăр пурăннă. Юман-паттăр çумĕнче Çĕр-паттăр пурăннă. Виççĕшĕ те вĕсем пĕр кăмăллă, ырă кăмăллă пулнă, кирек хăçан та пĕр-пĕрне пăрахман. Çырма-паттăр асапа лексен, Çĕр-паттăр персе çитнĕ. Çĕр-паттăр асапа лексен, Юман-паттăр персе çитнĕ. Юман-паттăр юман пек çирĕп, Çĕр-паттăр—çĕр пек пуян пулнă. Çĕр-паттăр—сăкăртан, Юман-паттăр — юр-вартан, Çырма-паттăр—çыран татăк тăман.

Юман-паттăр, никĕсне юман хывса, кермен çуртсем лартнă, Çырма-паттăр тăрна кусĕ пек тăп-тăрă кÿлĕсенче ылтăн çунатлă пулăсем ĕрчетнĕ, вăл юратнă юханшывсенче шур акăш пек шурă пăрахутсем ярăнса кăна çÿренĕ, Çĕр-паттăр çĕрĕнче — çĕр те пĕр тĕрлĕ çырла çимĕç, пин те пĕр тĕрлĕ ырлăх-пурлăх ÿсе çитĕннĕ. Çулла пулсан, çав çĕр çине çумăр çăвас вырăнне сарă çу çуса тăнă, тет. Кĕркуннепе çав çĕре çулçă ÿкес вырăнне ылтăн ÿксе тăнă, тет. Хĕлле пулсан çав çĕре,—шур юр çăвас вырăнне сахăр çуса тăнă, тет. Çуркуннепе çав çĕрте чечен чечек ÿснĕ, тет. Çапла вара виç паттăр ырă курса пурăннă. Çаксем çине пĕррехинче хура хурах тапăннă. Тискер тăшман тапăннă. Çав тăшман аштахан Юман-паттăр юнне ĕçнĕ, Çĕр-паттăр çимĕçне çинĕ, Çырма-паттăрăн çыр пек пуян пурлăхне туртса илме шутланă. Анчах виçĕ паттăра никам та хур тăвайман, хĕçпе килнĕ—хĕçпе пĕтнĕ, çĕршĕн килни—çĕре кĕнĕ. Виçĕ паттăр, виç тăван халĕ те ырă кураççĕ...»

— Чим-ха, Васлей пичче, тăхта-ха, мотор сасси мар-и вара?—пÿлчĕ ăна Петр Евламцьев, Шăхасан районĕнчи «Заря» колхозран яланлăхах вăрмана ĕçлеме килнĕскер.

— Михаил Николаевич малтанхи рейсран таврăнать,—ответлерĕ Василий Яковлевич.

— Васлей пичче, эсĕ каланă Юман-паттăр маншăн Михаил Николаевич пекех туйăнать. Çавăн çинчен мар-и сан ку сăмаху. Эсĕ ăна хăвах хайланă пулĕ-ха? Сикки старик ун пек халапсем яман-тăр,—иккĕленнĕ пек пулчĕ Петĕр.

— Халапĕ ку ĕлĕкхине—ĕлĕкхи мар та-ха, хальхи те, анчах Сысуйкин юлташ çинчен урăх юмах пур. Ăна эсĕ паян илтсе мар, ĕçре курăн. Вăл юмаха «Вăрман паттăрĕ» теççĕ.

* * *

Михаил Николаевич яланхи пекех будильник сассипе вăранчĕ. Мăшăрне тутлă ыйхăран вăратасшăн мар пулса, вĕттĕн-вĕттĕн пусса тĕпел кукрине кĕчĕ.

— Тĕлĕнмелле, паян та манран иртерех вăраннă,—хăйне хăй каласа илчĕ вăл.

Вăл, мăшăрĕпе калаçа-калаçа сĕтел хушшинчен тухрĕ, пальтоне тăхăнчă май, хăйĕн ачисене ăшă куçпа пăхса çаврăнчĕ. Пĕр пÿлĕмре—Володьăпа Праски, амăшĕн пÿлĕмĕнче—Нинăпа Толя сывăраççĕ.

— Сывăраççĕ. Вунвиçĕ çулхи Володьăпа вуникĕ çулхи Праски пек, виçĕ çулхи Нинăпа çул çурăри Толя пек ачасем ăçта кăна сывăрмаççĕ-ши çак самантра. Тен, Сталинградра, Мускавра, Куйбышевра е Донбасри пĕр-пĕр шахтер килĕнче манăн Нина пекех виçĕ çулхи хĕрача та хăйĕн пуканине ыталасах сывăрать пулĕ.

— Ĕçÿ ăнăçлă пултăр, Миша,—пÿртрен тухса ăсатса ячĕ Мария.

Михаил Николаевич тракторне тĕпăлĕн пăхса тухрĕ. Пурте йĕркеллĕ.

Михаил Николаевичăн ĕçĕ паян та ăнăçлă пуçланчĕ. Бункерти тинĕ шакмак пĕр самантрах çунма тытăнчĕ. Чокеровщик Владимир Ильич Лачин хатĕр пĕренесене сăнчăрпа çаклатса хума ĕлкĕрнĕ.

Тракторист пĕренесене мĕнле çаклатнине тĕрĕслесе пăхрĕ: «ырă» терĕ вăл хăй ăшĕнче, унтан чокеровщика тепĕр рейс валли пĕрене хатĕрлемеллине каласа хăварчĕ, тепринче тракторпа ăçтан çаврăнса кĕме меллĕрех пулассине сăнарĕ. Акă лебедка çыхса хатĕрленĕ пĕрене çыххине трактор патнелле турттарса илчĕ. Пĕренене щит çине хăпартрĕ, трактор тапранса та кайрĕ.

Трактор тăвалла хăпармалли вырăна çитрĕ. Кунта ĕнтĕ трактор моторĕ пĕрене çыххине туртса хăпартаймасть.

Алексей Ильич, тракторист помощникĕ, мĕн тумаллине юлташĕ каламасăрах ăнланса илчĕ, пĕрене çыххине вĕçертсе хăварчĕ, трактор пушăллах тăвалла хăпарса çитрĕ, çав самантрах, трактор пынă вăхăтрах, лебедка ĕçлеме пуçларĕ, унтан трактор чарăнсан лебедка пĕрене çыххине тăвалла илсе хăпартрĕ, трактор каллех малалла хускалса кайрĕ. Текех ĕнтĕ, склада çитиччен туллă-сăртлă вырăн çук. Трактор тăватă кубометр çураллă лава хăвăртран-хăвăрт илсе пырать. Акă вăл склада çитрĕ.

Глупов юлташ бригадинчи рабочисем, тин çеç килсе çитнĕскерсем, трактористa ырă сунчĕç:

— Салам, Михаил Николаевич.

— Ырă кун пултăр, Миша!

— Паян, тăванăмсем, сире хĕрÿ килет. Пĕрене айне тăвасран хăратăп-ха эпĕ,— юриех шÿт тукаларĕ Михаил Николаевич.

— Юрать, юрать, Миша, эпир уптан хăрамастпăр. Ытларах турттарма тăрăш. Пĕрене кĕтсе, халап çапса лармалла ан пултăр. Пирĕн кунта Василий Яковлевич çул çинче халап яма хатĕрленсе килчĕ,— шÿте çĕклерĕ коммунист-бригадир, Петр Петрович.

Машина малтан килнĕ çулпах хăвăрттăн каялла чакса йывăç илме кайрĕ.

— Кур-ха, пĕр самант та усăсăр ирттересшĕн мар,—ерипен кăна каласа хучĕ пĕрене купалакан Михаил Николаевич Бирюков, участокри партгруппорг.— Чăнах та, паян пире ытти кунхинчен хĕрÿрех килет пулас. Куратăр-и çитнĕ-çитменех калле çавăрăннă та. Капла майпа вăл, чăнах та, пире пĕрене хушшине тăвать.

Партгруппорган сăмахĕсем кирек хăçан та тÿрре килеççĕ, вăл хальхинче те йăнăшмарĕ. Акă ĕнтĕ, Михаил Николаевич пиллĕк, вуннă, вунпиллĕк, çирĕмпиллĕк рейс турĕ.

Малтанлăха складра çав тери нумай йывăç килсе капланчĕ. Вăрманта виç-тăватă çул пĕр тăтăш ĕçлекен Петр Тютин, Василий Яковлев, Семен Иванов турттарса килнĕ йывăçа вăхăтра купаласа тăрайманран вăтаннă пек те пулчĕç.

— Атьăр-ха, ачасем, хĕрÿллĕнрех! Миша пиччерен йывăç çитмест тесе хăйĕнчен кулмалла пултăр,— хавхалантарчĕ вĕсене Николай Бирюков, çирĕм пилĕк çулхи вăйпитти йĕкĕт.

Ушкăн-ушкăн выртакан пĕренесем самантрах пĕр çĕрелле, пĕр пысăк купана пĕрлешрĕç. Анчах та Михаил Николаевич вĕсен вырăнне çĕнĕрен иле-иле килчĕ, çакă вара халап-юмахсем юратакан Василий Яковлевшăн Михаил Николаевич тракторпа мар, халиччен куç тĕлне лекмен асамлă машинăпа ĕçленĕ пекех туйăнчĕ.

Ĕç кунĕ çĕнĕ çĕнтерÿпе, çĕнĕ савăнăçпа вĕçленчĕ. Вăрман çыннисем килелле таврăнаççĕ. Вĕсем хушшинче Михаил Николаевич утса пырать. Вăл паян тата тепĕр рекорд тунăшăн пурте савăнаççĕ, акă каллех Кирене, Шупашкара, Шупашкартан—Мускава çĕнĕ хыпар персе çитĕ. Çав хыпар пĕтĕм Совет Союзĕ тăрăх саланĕ.

— Матур, Михаил Николаевич! Çĕр хĕрĕх çичĕ кубометр турттартăн эппин? Ку вăл, тăван, питĕ пысăк рекорд!— хĕпĕртет Кильтеев.

— Эсир те маттур, Федор Федорович, эсир те нумай пулăшнă мана. Ытти вăрман участокĕсенче трактористсем, авă, делянкăна япăх хатĕрленипе, йывăççене урлă-пирлĕ пăрахса тухнипе, тракторпа çаврăнкаласа çÿресех вăхăт ирттереççĕ. Пирĕн пĕр самант та ахаль иртмест, — тÿрех тие те тух! Уншăн Гальăна, техноруκа, спасибо. Тав тумаллисем нумай, Федор Федорович, хамăн ĕçĕмпе сыхăннă çынсене кашниех тав тăвас килет манăн.

Вĕсем вăрахчен калаçса çÿрерĕç.

— Паян хаçатсенче Сталин юлташ патне янă çырăва пичетленĕ. Тепĕр çур сехетрен çав çырăва вулама клуба пыр,— сĕннĕ Кильтеев.

Вăрман ĕçлекенсем Южнăй участокри клубалла утаççĕ. Главнăй инженер Пшеничный вĕсене ырă сунса кĕтсе илет. Акă вăл «Чăвашвăрман» трестĕн вăрман хатĕрлекен предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем, колхозниксем аслă Сталин патне янă çырăва вулать. Залра ларакансем пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ.

— Куртăн-и, Михаил Николаевича та асăннă! Каларăм вĕт, вăрман паттăрĕ тесе,— юлташне пăшăлтатса калать Васлей пичче.

Зал шăп. Пурте, кашни сăмаха мĕн ĕмĕрлĕхех асра тытса юласшăн, сывламасăр итлеççĕ. «Сире, хаклă Иосиф Виссарионович, тĕнчери мĕнпур ĕçсыннисен ырлăхĕшĕн нумай çулсем хушши пурăнма пĕтĕм чĕререн сывлăх сунатпăр».

— Аслă Сталина—урра!

— Сывă пултăр, аслă Сталин!—янрать залра.

Акă вăрман паттăрĕ, Михаил Николаевич сăмах илет.

— Аттемĕр,— тет вăл чĕре патĕнчен тухакан сассипе,— Сталин! Пирĕн сăмах—çирĕп сăмах. Эпир хамăр çĕршыва, çулпуçăмăра, мире юратнине сăмахпа çеç мар, ĕçпе те кăтартса парăпăр.

...Халăх салансан та клубра Михаил Николаевич малашнехи ĕçсем çинчен Пшеничныйпа калаçса ларчĕ. Çав калаçăва Висалий Яковлев та, Николай Бирюков та итлесе ларчĕç.

— Инженер юлташ, аслă стройкăсенче, Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте, Куйбышевпа Сталинград таврашĕнче тĕлĕнмелле хăватлă машинăсем ĕçлеççĕ. Минск самосвалĕ 25 тонна турттарма, Уралмашра тунă утакан экскаватор 10 пин çынна улăштарма пултарать. Манăн «КТ-12» тракторăн вăйне кăшт çеç хăпартасчĕ, вара эпир те хальхи пек сезонра 10 пин кубометр мар, 25 пин кубометр йывăç турттарнă пулăттăмăр. Çавăн пек машина парасчĕ мана.

— Тĕрĕс калатăн, Михаил Николаевич, коммунизм тăвакансем çитĕнÿпе лăпланса лармаççĕ. Пысăк, вăйлă машинăсем вăрман промышленноçĕнче те пулĕç. Ун çинчен наука çыннисем шухăшлаççĕ, Сталин шухăшлать — главнăй инженер чаплă тракторист çине кăмăллăн пăхса илчĕ.

— Хуçине кура—учĕ, трактористне кура—машини,— сăмах хушрĕ Васлей пичче.

Пшеничный, Михаил Николаевичăн хулĕнчен тытса, унпа уйрăлас умĕн калаçса пычĕ:

— Ларать те вара пирĕн Михаил Николаевич пысăк, вăйлă машина çине, кĕрлеттерсе çеç пырать. Вăл ун чухне уйăхра пиншер кубометр йывăç турттарать. Вара унăн ĕçĕнчен пĕтĕм тĕнче тĕлĕнсе тăрать.

Çапла пултăр!

Валентин УРДАШ.

СОВЕТ СТРОИТЕЛЬСТВИ

Вăйлă тырпулшăн, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерессишĕн

ПĂРАЧКАВ. Çак кунсенче район Совечĕн çиччĕмĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси 1951 çулхи ялхуçалăх планне мĕнле пурнăçланине тата 1952 çулта тăракан задачăсене сӳтсе яврĕ. Ку ыйтупа район Совет исполкомĕн председателĕ Н. Ф. Смыков юлташ доклад туса пачĕ.

Большевиксен партийĕ, Совет правительстви пысăк пулăшу панипе районти колхозсем организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклене пычĕç. Иртнĕ çулта тырпул акмалли плана 101 процент, сурхи тырăсем акмалли плана 102 процент, техникăллă культурăсем акмалли плана 101 процент тултарнă. Чылай колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç. Тĕслĕхрен, М. Горький ячĕпе тăракан колхоз 593 гектар çинче кашни гектартан 15-шер центнер тĕштырă туса илнĕ, уйрăм участоксенче вăл 20—23-шер центнер илнĕ. Чкалов ячĕпе тăракан, «Красный пахарь», Ленин ячĕпе тăракан, «Красная горка» колхозсем кашни гектартан 13—14-шер центнер тĕштырă, ыраш 16—17-шер центнер пухса кĕртнĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз кашни гектар çинче 30-шар центнер ыраш çитĕнтернĕ.

Пăрачкав МТС-ĕ те вăйлă тырпул туса илессишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнса пысăк çитĕнӳсем турĕ. Тракторсемпе ĕçлемелли плана вăл чыслă пурнăçларĕ.

Районти колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те чылай çитĕнӳсем турĕ. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, ĕнесем енĕпе 13,5 процент, сыснасем енĕпе 36,7 процент, сурăхсем енĕпе 10,1 процент, лашасем енĕпе 17,9 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 93 процент ӳснĕ. Çавăнпа пĕрлех выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те чылай хăпарнă. Тĕслĕхрен, М. Горький ячĕпе тăракан колхозра 11 уйăх хушшинче кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.910-шар литр, Суворов ячĕпе тăракан колхозра—1.470-шер литр, Ленин ячĕпе тăракан колхозра—1.580-шар литр сĕт суса илнĕ. Ытти выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те, колхоз ĕçченĕсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, М. Горький ячĕпе тăракан колхозри сыснасем пăхакан М. Потапова юлташ кашни сысна аминчен вăтам шутпа 19,2 çура, Киров ячĕпе тăракан колхозри Усовăпа Шитова юлташсем—19,1 çура, «Красный пахарь» колхозри Никитин юлташ—18,7 çура илнĕ.

Колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене те срокчен пурнăçларĕç.

Çитĕнӳсемпе пĕрлех районта çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр колхозсенче техникăллă культурăсен тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшмаççĕ. Район пĕтĕмĕшпе илсен çĕрулми, табак, йĕтĕн туса илмелли плана чылай тултарайман. «Красный восход», «Факел», «Трактор» колхозсенче ку тĕлĕшпе ĕçсем уйрăмах начар.

Ку çитменлĕхсем колхозсенче агротехника кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçламаннинчен килнĕ. Районти хăшпĕр колхозсем минераллă удобренисем пачах та хатĕрлемен, вырăнти удобренисене уй-хире кăлармалли, сортлă вăрлăх тата нумай çул ӳсекен курăксем акмалли плана çителĕксĕр пурнăçланă. Агробиологи наукин çитĕнĕвĕсемпе производствăра япăх усă курнă.

Çак çитменлĕхсемшĕн, паллах ĕнтĕ, ялхуçалăх специалисчĕсем айăплă. Вĕсем колхозсенче сахал пулаççĕ, ялхуçалăхне массăпа сыхăнса ертсе пырас вырăнне кабинетра тунă ĕçсемпе лăпланса лараççĕ. Районти ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ Захаров юлташ кадрсене вĕрентес ĕçпе интересленмест, участоксенчи агрономсен ĕçĕсене кирлĕ пек тĕрĕслемест.

Сесси çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартма ĕне фермисенче сĕт суса илессине ӳстерме тăрăшмаççĕ. Ку вăл выльăхсене пăхса усрас ĕçе япăх туса пынинчен, зоотехника кăтартăвĕсемпе çителĕксĕр усă курнинчен килет.

Сесси хăшпĕр колхозсенче ĕç дисциплини япăх пулнине палăртрĕ. Сăмахран 1951 çулта ĕçкунĕсен минимумпе 1.200 колхозник тултарайман.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ республика ял хуçалăхĕ умне лартнă задачăна сӳтсе явса, район Совечĕн сессийĕ тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Ку решени тăрăх, тырпул акмалли лаптăка чылай пысăклатмалла, тырпул, çавăн пек выльăх-чĕрлĕх шучĕпе тухăçлăхне те чылай ӳстермелле.

Сесси ял Совечĕсемпе колхозсене социализмлă ăмăртăва анлă сарма, йышăннă решение тимлĕ пурнăçлама хушса хăварчĕ.

В. ТОНЫШЕВ.

Яланхи комиссисем ĕçре

ЕЛЧĔК. Аслă Елчĕк ял Совечĕн яланхи ялхуçалăх комиссийĕ пуçарнипе Ленин ячĕпе тăракан колхоз ялхуçалăх ĕçĕсенче пысăк çитĕнӳсем туса пырать. Комисси артеле организацине хуçалăх тĕлĕшне пĕрмай тĕреклетсе çирĕплетме тăрăшать, колхоз производствинчи пур ĕçсене те вăхăтра туса пыма пулăшать.

Колхоз 1951 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Вăл 646 гектар çинче вăтам шутпа 19,27 центнер ыраш, 450 гектар çинче—18,4 центнер тулă туса илчĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те колхоз пысăк çитĕнӳ турĕ. Халĕ фермăсенче 285 ĕне, 557 сысна, 498 сурăх тата 3.423 чăх-чĕп усраççĕ. Ку вăл выльăх-чĕрлĕх йышне виçĕ çул хушшинче ӳстермелли планпа пăхнинчен чылай ытларах. Çак вăхăтрах колхоз государство умĕнчи обязательствăсене те чыслă пурнăçларĕ. Вăл 1951 çулхи планран ирттерсе кăçалхи çул шучĕпе 30 центнер аш-какай, 19.170 литр сĕт, 37.266 çăмарта та 252 килограмм брынза пачĕ.

Яланхи комисси ĕçĕ ăнăçлă пулса пыни вăл активпа тачă сыхăнса тăнинчен килет. Комисси хăйĕн ĕçне 23 активиста хутшăнтарать. Активистсем хушшинче колхоз бригадирĕсем, тимĕрçĕсем тата ытти специалистсем тăраççĕ. Ку вăл ĕçе тĕплĕн пĕлсе туса пыма пулăшать, ялхуçалăхне куллен малалла хăпартма май парать.

Çак кунсенче яланхи ялхуçалăх комисси членĕсем активпа пĕрле çитес çуркунне колхоз мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрĕç. Ун хыççăн яланхи комиссийĕн ларăвĕ пулса иртрĕ. Комисси хăйĕн ларăвĕнче колхоз правленине ялхуçалăх машинисене кĕске вăхăтра юсама хушса хăварчĕ, вăрлăхсене сортлас ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕ тата минераллă удобренисене хатĕрлес ĕçе вăйлатмаллине кăтартрĕ.

Ял Совечĕн яланхи комиссийĕсем ялти актив çине тайăнса ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, бюджет комиссийĕ (председателĕ М. Н. Федоров депутат) укçа-тенкĕ пухмалли плана куллен иртгерсе тултарассишĕн тăрăшать. Ку вăл комисси членĕсем тата актив халăх хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе витĕмлĕ тунинчен чылай килчĕ. Ял Советĕнче ĕçсыннисем хушшинче час-часах докладсемпе калаçусем иртгереççĕ. Сăмахран, налог агенчĕ М. З. Чернов юлташ ялти ĕçсыннисене Совет Союзĕнчи коммунизмăн аслă стройкисем çинчен каласа парать тата Совет государствин налогĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен докладсем тăвать. Çакă вăл финанс планне тултарас тĕлĕшпе пысăк пулăшу парать.

Аслă Елчĕк ял Совечĕ IV-мĕш кварталти финанс планне 1951 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

Культурăпа сутĕç енĕпе ĕçлекен яланхи комиссине депутат П. А. Печков юлташ ертсе пырать. Комисси ĕçсыннисен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркелесе пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче часах лекцисемпе докладсем организацилет, клубăн тата медицина пункчĕн ĕçĕсене лайăхлатма куллен пулăшать. Иртнĕ çулта клуб çумĕнчи библиотека валли 3.160 тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем туяннă. Бюджетпа самообложени укçинчен шкула юсама 27.205 тенкĕ расходланă. Кунсăр пуçне шкул валли 1.500 тенкĕлĕх вĕренмелли хатĕрсем илнĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче ял Советĕнче всеобуч законĕ чыслă пурнăçланса пырать.

Ял Совечĕн хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнĕвĕсем яланхи комиссисем хăйсен ĕçĕсене пĕрмай тăрăшса, план тăрăх туса пынинчен килет. Комиссисем кашни уйăхрах çирĕп ĕç планĕ çирĕплетсе, ăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Планпа пăхнă мероприятисене пурнăçланине ял Совечĕ куллен тĕрĕслесе пырать, яланхи комиссисене пысăк пулăшу парать.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.

Финанс планне иртгерсе тултарнă

ИШЛЕЙ. IV-мĕш кварталти укçа-тенкĕ пухмалли плана срокчен иртгерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса Мамка ял Совечĕ (председателĕ Г. Иванов, налог агенчĕ В. Тяптеева) плана 110,8 процент тултарчĕ. Вăл районта малти вырăна тухрĕ. Çавăн пекех IV-мĕш кварталти финанс планне Тăрăн ял Совечĕ 110,3 процент, Чаканар ял Совечĕ 105,8 процент, Мишер ял Совечĕ 100 процент тултарчĕç.

И. ГЕРАСИМОВ.

* * *

СОВЕТСКИ. Турай ял Совечĕ çулсерен финанс планне тултарас тĕлĕшпе районта малти вырăнта пырать. Ял Совечĕ çумĕнчи бюджет комиссийĕ хăйĕн ĕçĕсене тăрăшса туса пынипе 1951 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне декабрĕн 25-мĕшĕ тĕлне 105 процент тултарнă. Колхозниксем заем укçине тӳлесе татса облигацисене алла илчĕç.

В. МИХАЙЛОВ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра



Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри конструкторсем коммунизмăн аслă стройкисем валли çĕнĕ аппаратсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе нумай ĕçлеççĕ, техникăллă пысăк ыйтусене ăнăçлă татса параççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: инженер-конструктор К. Яковлев юлташ. Вăл пуçаруллă, хăвăрт ӳсес пыракан работник, унăн ятне заводри Хисеп хăми çине темиçе хутчен те кĕртнĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ фотоӳкерчĕкĕ.

1951 çулта Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Вăл коммунизмăн аслă стройкисен, металлургипе çĕр кăмрăк промышленноçĕн, Мускав хулинчи нумай хутлă çуртсен тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсен заказĕсене пурне те чыслă пурнăçларĕ. Завод плана пур изделисем енĕпе те тултарчĕ тата иртгерсе тултарчĕ. Тăван çĕршыва çулталăкри планран иртгерсе 10 миллион тенкĕлĕх ытлă продукци туса пачĕ.

Социализмлă ăмăрту анлă сарăлни рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ӳссе пыни завода ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана иртгерсе тултарма май пачĕ. Çĕршер рабочи икĕ çулталăкри ĕç нормине е ытларах та тултарчĕç. Пĕлтĕр кашни тăватă рабочи 1950 çулта виççĕ рабочи туса кăларнă чухлĕ продукци туса хатĕрленĕ. Стахановецсемпе рационализаторсем, конструкторсемпе технологсем техникăллă ыйтусене татса парас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. СССР Электропромышленность министерствине пăхăнса тăракан предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче завод темиçе хут малти вырăна тухрĕ.

Уйрăмах завод коллективĕ иртнĕ çулхи IV-мĕш квартала паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Декабрь уйăхĕнче пур цехсем те производство планне срокчен тата иртгерсе тултарчĕç. Завод уйăхри планран иртгерсе чылай продукци туса кăларчĕ.

1952 çулта завод коллективĕ умĕнче çĕнĕ те ответлă задачăсем тăраççĕ. Хăвăрт аталанса пыракан халăх хуçалăхне электроаппаратсем ытларах кирлĕ. Кăçал завода пĕлтĕрхинчен нумайрах тата лайăхрах продукци туса кăларма задани панă. Правительство йышăннă тăрăх кăçал заводăн нумай хутлă пурăнмалли çуртсем, поликлиника, культура çуртĕ тата ытти те туса лартмалла. Коммунизм строительствин аслă задачи, партипе правительство совет çыннисемшĕн стаинла тăрăшни завод коллективĕн хастарлăхне ӳстерсе пырать. Çĕршер стахановецсем çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Иртнĕ декабрь уйăхĕнче пĕрремĕш изоляционнăй цех плана 117 процент тултарчĕ. Цех коллективĕ январьте те ăнăçлă ĕçлет. Цех пур ĕçе те талăкри график тăрăх туса пырать. Л. Цветковăпа Н. Афанасьева прессовщицăсем тата ытти чылай стахановкăсем ĕç нормине куллен 200 процент тултарса пыраççĕ.

М. БРИКЕР.

Редакцие килнĕ çырусем

Выльăх-чĕрлĕх апатне хакламаççĕ

Чурачăк районĕнчи хăшпĕр колхоз руководителĕсем выльăх апатне кирлĕ пек хакламаççĕ. Ку пысăк çитменлĕх «Красный флот» колхозра уйрăмах сисĕнет.

Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлесси çинчен çуллахи вăхăтра фермăсен заведующийĕ Г. Васильев, колхоз председателĕ И. Осипов юлташсем шухăшланă. Çăн та, лашасемпе ĕнесем валли апат çителĕклех хатĕрленĕ. Анчах хатĕрленĕ апата фермăсене çирĕплетсе паман. Кунта выльăх апачĕпе кашни ферма работникĕ хăй пĕлнĕ пек усă курать, кăтартса панă çирĕп норма çук. Сыснасем валли халех апат çитменнине çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать.

Ку анчах та мар. Колхозра обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли хатĕрленĕ улăм кирлĕ-кирлĕ мар çĕре саланса пĕтет. Итем хуралçисене ячĕшĕн кăна тăратнă, вĕсем хăйсен ответлăхне туймаççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та тултарман. Плана тултарма тата 200 пуç ытлă кайăк-кĕшĕк, 20 сурăх, виçĕ лаша кирлĕ. Çавăн пекех çамрăк выльăхсене пăхса илессине те япăх йĕркеленĕ. Хĕле кĕнĕренпе 7 кĕсре хăм пăрахнă. Ытти пĕтĕ кĕсресене те начар пăхаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçе хастарлă колхозниксене уйăрса лартас вырăнне темиçе уйăх хушши ĕнтĕ колхоз ĕнисене А. Петрова единоличница пăхать.

Ферма работникĕсем хушшинче ăнлантарулла-массăллă ĕç те çителĕксĕр. Юлашки икĕ уйăхра фермăра ĕçлекенсем патĕнче пĕр калаçу та иртгермен.

«Красный флот» колхозри йĕркесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ял Совет та нимĕн те тумасть.

А. КОТЛЕЕВ.

Кăмаш ялповĕн ĕçне лайăхлатмалла

Колхозниксем суту-илӳ организацийĕсен ĕçне куллен лайăхлатса пыма, промышленность таварĕсемпе куллен кирлĕ таварсем сутассине лайăхлатма хушаççĕ. Ялпо правленийĕсен ялти ĕçсыннисем валли çĕнĕ таварсем ытларах кӳрсе килессишĕн, суту-илӳ ĕçне вăйлатассишĕн тăрăшса ĕçлемелле.

Анчах та Вăрнар районĕнчи Кăмаш ялповĕн правленийĕ (председателĕ И. Петров юлташ) суту-илӳ ĕçне пачах та çителĕксĕр йĕркеленĕ. Ялпон ялсенчи лавккисем час-часах хупă тăни, лавккасенче куллен кирлĕ таварсем—краççын тата тăвар çукки çинчен районти «Социализм çулĕпе» хаçатра та çырнăччĕ. Кун хыççăн та лавккасенче пысăк улшăну пулмарĕ. Ялпо халĕ те суту-илӳ ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе пымасть.

Елмен Сунарпа Мăн Турхан ялĕсенчи лавккасенче кĕске вăхăт хушшинчех икĕ-виçĕ продавец улшăнчĕ. Елмен Сунарти лавкка продавец çук пирки ултă уйăх ытла хупă тăрать. Çавăн пекех Мăн Турхан ялĕнчи лавккана та хупрĕç. Çак лавккасем хупă тăнине пула ялпо тавар çаврăнăш планне уйăхран уйăхах тултарса пымасть.

Пайщиксемпе потребительсем: пирĕн ялсенчи лавккасем хăçан йĕркеллĕ ĕçлеме тытăнаççĕ? тесе ыйтсан, ялпо правлени председателĕ И. Петров юлташ лавккасенче ĕçлеме çынсем «тупайманни» çинчен пĕлтерет.

Райпотребсоюз та Кăмаш ялповĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть.

Пайщиксем райпотребсоюзран Кăмаш ялповĕнчи çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме, колхозлă ялсенчи суту-илĕве тивĕçлипе йĕркелеме ыйтаççĕ.

Е. ЗАХАРОВ,
Елмен Сӳнарти клуб заведующийĕ.

„Чăваш Коммуни" хаçатра çырнă хыççăн

„Колхозниксен вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемелле"

«Чăваш Коммуни» хаçатра 1951 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче пичетленнĕ «Колхозниксен вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемелле» ятлă статьяра Советски районĕнчи хăшпĕр колхозсенче агротехникăпа зоотехника вĕрентĕвне кирлĕ пек организацилеменнине, уйрăм ялхуçалăх специалисчĕсем колхозниксен вĕренĕвне йĕркелеме тăрăшманнине, Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин ялхуçалăх пропагандин управленийĕ вырăнсенче колхозниксене вĕрентесси мĕнле пынипе çителĕксĕр интересленнине, икĕ çул хушшинче управленирен Советски районне пĕр çын та пырса курманнине кăтартса панăччĕ.

ВКП(б) Советски райкомĕ «Колхозниксен вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемелле» ятлă статьяра кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни, статьяна районти ялхуçалăх пайĕнче ĕçлекенсен производствăллă канашлăвĕнче, агротехникăпа зоотехника курсĕсен руководителĕсемпе пĕрле, сӳтсе явни çинчен пĕлтерчĕ.

Районти ялхуçалăх пайĕ Крупова агрономa хăйĕн ĕçĕсене кирлĕ пек туса пыманшăн вырăнтан кăлармалла тунă.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Чăваш Коммуни» хаçат редакцине Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Ишеккассинчи вулав çуртчĕ çителĕксĕр ĕçлени çинчен çыру килнĕччĕ. Редакци çырăва, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма, ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомне янăччĕ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ çыру авторĕ Ишеккассинчи вулав çуртчĕн çитменлĕхĕсене тĕрĕс критикăлани, халĕ çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Вулав çуртчĕн ĕçне лайăхлатасси çинчен пуçламăш парторганизаци пухăвĕнче тата ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă. Халĕ вулав çуртчĕ валли вутă кӳрсе панă. Вулав çуртчĕн заведующийĕ Квартиров юлташ вулав çуртĕнче докладсемпе калаçусем иртгерес, ушкăнпа хаçат-журнал тата кĕнеке вулас ĕçе лайăхлатнă.

* * *

Редакцие Калинино районĕнчи Юнтапа ял Советĕнчи ялсенче кино йĕркеллĕ кăтартманни çинчен çыру килнĕччĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Калинино район Совечĕн исполкомĕ çырура фактсене тĕрĕс кăтартни, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, халĕ Юнтапа ял Советне кĕрекен ялсенче кино йĕркеллĕ кăтартма тытăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Куллен кирлĕ таварсен пахалăхне лайăхлатмалла

Промкомбинатпа артельсен колхозсем валли хуçалăхра кирлĕ таварсем туса кăлармалла. Пире урапа-çуна çитменни ĕçре тăтăш хытă чăрмантарать. Комсомольски районĕнче урапа-çуна сахал туса кăлараççĕ. Вĕсене ирĕксĕрех хамăртан 30—35 километрти—Первомайски районĕнчи Чементи промкомбинатран кӳрсе килме тивет. Сăмах майĕн çакна каласа хăвармалла. Чементи промкомбинат руководителĕсем продукци пахалăхĕшĕн кĕрешмеççĕ. Иртнĕ çуркунне ку промкомбинатра кустăрмасем туянтăмăр. Кӳнчекĕсене чĕрĕ хурăнтан тунипе çав кустăрмасен шăлĕсем кӳрсе килсенех тухса ӳкме пуçларĕç.

Иртнĕ кĕркунне 25 çара çуна туянтăмăр та, вĕсемпе колхозниксем вăрман турттарма кайрĕç. Декабрĕн пирвайхи кунĕсенче вĕсем пурте тупанĕ шăтнă çунасемпе таврăнчĕç. Первомайски райисполкомĕпе Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерстви аçăннă промкомбинат продукцийĕн пахалăхне часнипех лайăхлатма мерăсем йышăнни вырăнлă пулĕччĕ.

Комсомольски районĕнчи Нĕркеçри «КИМ» промартель тата ытти артель руководителĕсене пĕр сĕнӳ парас килет. Промысла артелĕсем вăрман çулленех нумай туянаççĕ. Çав вăрманта вĕсем чи малтан çакă курсĕнлен мунчала хатĕрлес тĕллеве тытаççĕ. Лайăх çакă йывăç чылай чухне вутта каять. Мĕншĕн-ха пысăк çакă йывăçран тĕрлĕ савăт-сапа, выльăх валашкисем, кĕреçесем тата ытти те туса сутас мар? Кун пек тавар колхозсене нумай кирлĕ.

Артельсем сӳре, турта, кĕрепле, пĕкече, пăяв, çекĕл сахал тăваççĕ. Шăпăр нимех те мар пек, анчах вăл та пире куллен кирлĕ япала. Ирĕксĕрех ăна шыраса çӳреме е уйрăм çынсенчен хаклă хакпа туянма тивет. Çав вăхăтрах вăрман туянакан артельсем хурăн тăррисене, çатра-çапă тесе, лавĕ-лавĕпе çунтараççĕ. Мĕншĕн-ха çунтарса сая яриччен вĕсенчен шăпăр туса сутас мар?

Колхозлă ялăн культури хăвăрт ӳсет. Çакна эпир хамăр ял пурнăçĕнче те куратпăр. 1951 çулта ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тырă валеçнĕ хыççăн ялти ĕçченсем хăйсен пӳлмисене çĕршер пăт тырăпа тултарчĕç. Государство валли вăрман хатĕрлесе илнĕ укçапа колхозниксем культура таварĕсем туянаççĕ.

Колхозниксене илемлĕ çурт-йĕр, лайăх пахалăхлă сĕтел-пукан кирлĕ. Эпир вулав çуртчĕ валли кăмăла каякан сĕтел-пукан тупаймарăмăр. Колхозник хăнана та каять. Хаклă тумтир тăхăннă колхозникпа унăн арăмĕн пасарта е хăнапа хыççăр-пуççăр çунапа каяс килмест-çке? Пирĕн те вĕсене ун пек ярас килмест. Тĕреллĕ хысла, ларкăчлă, тимĕрлетнĕ çунине ăçта тупас? Ун пеккине Комсомольски районĕнче тумаççĕ. Тарантас çатанне те Шупашкара кайсан çеç тупма пулать.

Пальто, костюм, атă-пушмак çĕлетмелли материал халĕ ытлăн-çитлĕнех, кăмăлна килекеннине суйласа ил. Артель мастерскойĕсенче çĕлетиччен шухăшлама тивет. Яковлева учительница Чайковский ячĕпе тăракан артельре костюм çĕлетнĕ хыççăн хытах пăшăрханчĕ. «КИМ» артелĕн мастерскойĕнче çĕлетнĕ атă çур çул тăхăнса çӳреме те чăтмарĕ. Промысла союз правленийĕсен вырăнти кадрсене вĕрентсе ӳстерес ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла.

Пирĕн мухтавлă тăван рабочи класс промышленность продукци пахалăхне лайăхлатас тата хакне йӳнетес ĕçре ырă тĕслĕх кăтартрĕ. Юлашки çулсенче туса кăларнă çĕршер тĕслĕ промышленность таварĕсем хăйсен ытарайми пахалăхĕпе чуна савăнтараççĕ. Эпир вырăнти промышленность предприятисен коллективĕсем те колхозсемпе колхозниксен ыйтăвĕсене пысăк пахалăхпа тивĕçтерессе шанатпăр.

Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхоз председателĕ
П. ЯКОВЛЕВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

★

Венгрири ĕçсыннисен 1951 çулхи çитĕнĕвĕсем

БУДАПЕШТ (ТАСС). «Сабад неп» хаçат иртнĕ çулталăкри ĕçсен итогĕсем çинчен статья пичетлесе кăларнă.

Хаçат çапла çырать: иртнĕ çулталăк пирĕн тăван çĕршывшăн мир ĕçĕшĕн çине тăрса кĕрешнĕ çул, социализм тăвас ĕçре çитĕнӳсем тунă çул пулчĕ. Пирĕн промышленность производствин шайĕ хальхи вăхăтра, вăрçă умĕнхипе танлаштарсан, 250 процента çитрĕ. Çĕршыври фабрикăсемпе заводсем 1951 çулхи виççĕмĕш кварталта, 1950 çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан, 24,8 процент ытларах продукци туса кăларчĕç. 1951 çулхи тăваттăмĕш кварталта тата пысăкрах çитĕнӳсем тунă. Ноябрь уйăхĕнче кăна фабрикăпа заводсен промышленноçĕпе сăрт-ту промышленноçĕ 1950 çулхи ноябрьтинчен 26,5 процент нумайрах продукци туса кăларнă. Венгри нумай пулмасть чи кая юлнă çĕрĕçлĕ çĕршывсенчен пĕри пулнă. Халĕ вара вăл çĕршыва индустриализацилес çулпа хăвăрт малалла кайса пырать. Çĕнĕ хуласем ӳсе лараççĕ, çĕнĕ заводсемпе фабрикăсем тăваççĕ. Ĕç хресченĕсем те пысăк çитĕнӳсем тунă. 1951 çулта çĕршыв ирĕке тухнăранпа нихçанхинчен те пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ.

1951 çулта Венгрири ĕçсыннисен миршĕн кĕрешес ĕçĕ анлă саралнă. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тума чĕнсе калани çине Венгри гражданĕсем пĕтĕмпе 7.148 пин çын алă пуснă.

Пирĕн тăван çĕршыва иртнĕ çулталăкра Америка империалисчĕсемпе Тито бандичĕсем нихçанхинчен ытларах тапăнчĕç, провокациллĕ ĕçсем турĕç. Фактсенчен çав ĕçсем Венгри Халăх республикине нимĕн чухлĕ те хавшатма пултарайманни курăнать. Çав вăхăтрах империалистсен агенчĕсене тăрă шыв çине кăларса пынă, вĕсене хытă çапса аркатнă.

Статьян юлашки пайĕнче: «Çĕнĕ çулта та пирĕн халăхпа пирĕн парти аслă Сталин ертсе пыракан мухтавлă мир лагерĕпе тачă сыхăнса малалла кĕрешсе, çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пырĕç», тенĕ.

Чехословакире индустри вăйланнă

ПРАГА (ТАСС). 1951 çулта Чехословаки Халăх республики чаплă çитĕнӳсем тума пултарнă.

Çĕршыв çĕнĕ çула ĕçри пысăк çĕнтерӳсемпе кĕтсе илет. Пиншер заводсем, фабрикăсем, шахтăсем çулталăкри ӳстерсе йышăннă заданисене срокчен пурнăçланă.

Иртнĕ çулхи—пилĕк çуллăх планăн виççĕмĕш çулĕнчи уйрăмах паллă çитĕнӳ вăл йывăр индустри хăвăрт ӳссе пыни пулать. 1951 çулта металлургин, машинăсем тăвакан промышленноçăн, энергетика промышленноçĕн нумай çĕнĕ предприятийĕсем ĕçе кĕнĕ, çĕнĕ чугун çулсем тата шоссе çулĕсем тунă. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, совет специалисчĕсем пулăшнипе, промышленноçăн çĕнĕ йышши нумай продукцийĕсене тума вĕренсе çитнĕ.

1951 çулхи 9 уйăх хушшинче Чехословаки промышленноçĕ, 1950 çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан, 14,4 процент ытларах продукци туса кăларнă. 1951 çулăн малтанхи çур çулĕнче промышленность продукцийĕсене вăрçă умĕнхинчен 59,8 процент ытларах туса хатĕрленĕ. Çакă вăл пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕсенче промышленность производствин шайĕ вăрçă умĕнхинчен 50 процент ытларах иртсе кайнине пĕлтерет.

Ĕçсыннисен пурнăçĕ те чылай лайăхланнă. Çакă ĕç укçи ӳснинчен тата ĕçсыннисем апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем нумайрах туяннинчен курăнать. 1951 çулта промышленность, ялхуçалăхĕ, наука тата культура енĕпе уйрăмах паха çитĕнӳсем тунăшăн малтанхи хут государство премийĕсем панă.

1952 çулта Чехословаки халăхĕ умне татах та чаплăрах малашлăхсем тухса тăраççĕ. Çак кунсенче Чехословаки правительстви халăх хуçалăхне çĕнĕ çулта аталантармалли плана çирĕплетнĕ. 1952 çулта çĕршывра промышленность производстви, 1951 çулхипе танлаштарсан, 21 процент, ялхуçалăх производстви 15 процент ӳсмелле.

Польшăри предприятисенче ĕçлекенсен хастарлăхĕ

ВАРШАВА, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри çĕр кăмрăк промышленноçĕнчи рабочисем 1951 çулхи плана ăнăçлă тултарнă. Халĕ вĕсем ултăçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнчи пĕррелĕш квартал планне срокчен тултарассишĕн кĕрешме тытăннă. Çĕнĕ çулта «Забже-Захуд» шахта коллективĕ лайăх ĕçлени палăрать. Ку шахтăра Завилский забойщик ертсе пыракан бригада кашни кунах задание вăтам шутпа 192 процент тултарать.

Металлистсем те шахтерсенчен юлмаççĕ. Металран тĕрлĕ япаласем тăвакан предприятисенче ĕçлекен рабочисем, Совет Союзĕнчи стахановецсен паха опычĕпе усă курса, ĕç тухăçлăхне чылай ӳстереççĕ. Техника оборудованийĕ хатĕрлекен «Згода» завод коллективĕ пуçарнипе çав промышленноçăн чи лайăх предприятийĕ ятне илме тивĕçлĕ пуласшăн ăмăртса ĕçлесси пуçланнă.

ООН Генеральнӑй Ассамблейин улттӑмӗш сессийӗ

СССР делегацийӗн пуҫлӑхӗ А. Я. Вышинский дискусси итогӗсене тунӑ. Вӑл США Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗн членӗсене тӑракан государствӑсене нумайӑшне „коллективлӑ мерӑсем" текенскерне пурнӑҫлама хутшӑнтарма хӑтланни путланса ларнине кӑтартса панӑ

ПАРИЖ, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС спецкорр). Политика комитечӗн паянхи ларӑвӗнче «коллективлӑ мерӑсем» тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн докладне сӳтсе явас ӗҫ вӗҫленнӗ. Ку ларура Инди, Пакистан, Великобритани, СССР тата США делегачӗсем сӑмах тухса каланӑ.

ООН членӗсем пулса тӑракан государствӑсенчен чылайӑшӗ ку ӗҫре мӗнле позици йышӑнни Инди делегачӗ тухса каланинчен лайӑх курӑнать. Вӑл Генеральнӑй Ассамблейӑн пӗлтӗрхи сессийӗнче «мирӗн усӑллӑ пӗрлӗх тӑвасси» ҫинчен сыпӑнӑ резолюцие Инди делегацийӗ ырламаннине аса илтернӗ. Ку резолюци Пӗрлешнӗ Нацисен Организацине ирӗкселӗрсе мерӑсем йышӑнма аппарат тӑвас ҫул ҫинелле илсе пынӑ ҫавӑн чухнех палӑрнӑччӗ. Ҫав вӑхӑтрах унта тавлашулӑ ыйтусене мирлӗ майпа йӗркелес тӗлӗшпе мӗнле ӗҫсем тумаллине ҫителӗклӗ палӑртманччӗ. Устав тӑрӑх мирлӗ пурнӑҫӑн кам хӑрушлӑх туса хунине Хӑрушсӑрлӑх Совечӗ кӑна палӑртма тата ҫавна май пӗр-пӗр решени йышӑнма пултарать. Ку ыйтусене пирки Генеральнӑй Ассамблея сӗннисем вара ООН членӗсемшӗн обязательнӑй пурнӑҫламалли решенисем пулмаҫҫӗ. Анчах кун пек сӗнӳсене государствӑсен пӗр пайӗ кӑна пурнӑҫласан, ытти ҫӗршывсем, ҫав шутра пӗр-пӗр аслӑ держава, ку сӗнӳсене килӗшмесен, ҫакӑ вара вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ ӳсесси патне кӑна илсе пыма пултарать. Акӑ мӗншӗн 11 ҫӗршыв тӑратнӑ резолюци проектне сасӑлана чухне Инди делегацийӗ нихӑш майлӑ та сасӑлама килӗшмен, тенӗ Инди делегачӗ.

Британи делегачӗ Ллойд сӑмах илнӗ. Вӑл нимех те калайман. Вышинский хӑйӗн сӑмахӗнче «коллективлӑ мерӑсем» текенскерне критикӑлани пире «питех те тӗлӗнтерчӗ», тенӗ вӑл. Анчах СССР делегацийӗ кӑларса тӑратнӑ сӑлтавсене хирӗҫ вӑл нимӗн те илсе кӑтартма пултарайман. Нимӗнле факта, тӗслӗх те тупаймасӑр аптраса, вӑл Совет Союзӗн тулашри политики ҫинчен халиччен пекех тем те пӗр элеклесе каланӑ.

СССР делегацийӗн пуҫлӑхӗ А. Я. Вышинский дискусси итогне тунӑ. Совет делегачӗ тухса калани мӗнпур делегацисем тата комитет залне пырса тулнӑ халӑхпа журналистсем тимлӗ итленӗ. Ытти чухне комитет ларӑвӗсен залне халӑх сахал пынӑ, унти вырӑнсенчен ҫурри ялан пуш пулнӑ. Совет делегачӗ калас умӗн комитет залӗнчи вырӑнсене пурне те халӑх йышӑннӑ, пушӑ вырӑн пачах юлман. Вышинский икӗ сехет ҫурри каланӑ. Вӑл пӗррремӗш комитетра американӑн «коллективлӑ мерӑсем» текен планне сӳтсе явас ӗҫ мӗнле пулса пыни ҫинчен тӗплӗ каласа панӑ, ҫав мерӑсене йышӑнни агрессиллӗ ӗҫсене туннине пӗтерни ҫинчен нумай тӗслӗхсем илсе кӑтартнӑ.

«Коллективлӑ мерӑсем» тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн заключенине ырлас тесе 11 ҫӗршыв тӑратнӑ резолюци проектне чылай делегацисем килӗшменнине Вышинский палӑртнӑ. Хӑшпӗр делегацисем, сӑмахран, Колумбия, Мексика, Чили, Аргентина, Перу делегацийӗсем США ертсе пыракан Атлантика блокӗн кирек мӗнле ӗҫне те яланах ырлама пулӑшса ырлаҫҫӗ. Анчах вӗсем те хальхинче комитет докладне тата 11 ҫӗршыв представителӗсен резолюци проектне хайсем килӗшменнине пытарса тӑма пултараймарӗҫ. Докладпа резолюци проекчӗ чылай делегацисемшӗн ҫакӑнтан палӑрчӗ: ...ассен ҫӗршывӗсен делегацийӗсем, Афганистан, Латинла Америкӑри хӑшпӗр ҫӗршывсем асӑннӑ резолюцие питӗ пысӑк тӳрлетӳсем кӗртме сӗнчӗҫ. Доклад авторӗсем тата 11 ҫӗршыв резолюци проекчӗн авторӗсем ҫав тӳрлетӳсене йышӑнчӗҫ. Вӗсем ку шутра «коллективлӑ мерӑсем» текенскерсем тӗлӗшпе ӗҫлекен комитет докладне ырлас мар тесе панӑ сӗнӗве те йышӑнчӗҫ, комитет докладне ырласси ҫинчен сыпри асӑннӑ резолюци проекчӗн тӗп вырӑнта тӑратма пӑрахнӑ. Докладпа резолюци проекчӗн авторӗсем ҫав тӳрлетӳсене йышӑнни асӑннӑ резолюци проекчӗ путланса ларнине уҫҫӑнах кӑтартса парать.

«Коллективлӑ мерӑсем» текенскерсен авторӗсем кӑларса тӑратнӑ суя сӑмахсене пӗр пункчӗ хыҫҫӑн тепӗр пунктне Вышинский тӗплӗ тишкерсе тухнӑ. Ҫав «мерӑсем» пӗтӗмпех Устава хирӗҫле ӗҫсем пулса тӑнине, ҫав ӗҫсене Пӗрлешнӗ Нацисен организацийӗнчен США ертсе пыракан государствӑсен агрессиллӗ ҫар блокӗ туса хурас шутпа пурнӑҫлама палӑртнине совет делегачӗ тепӗр хут кӑтартса панӑ.

США, Великобритани тата Франци представителӗсем Совет Союзӗн резолюци проектне хирӗҫ кӑларса тӑратнӑ сӑлтавсене СССР делегацийӗн пуҫлӑхӗ питӗ критикӑланӑ. Ҫав ҫӗршывсен делегацийӗсем тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа, тӗрӗс йӗркелеме тата тӗнчери пурнӑҫра пулса тӑнӑ йывӑрлӑхсене пӗтерме, ҫав шутра Корейӑри ҫапӑҫӑва чарса лартас пирки пыракан калаҫусене хӑвартрах вӗҫлес ӗҫре пулӑшма Совет Союзӗ килӗшес тӗлӗшпе пӗр утӑм та тӑвасшӑн мар, ҫавӑнпа та вӗсем хӑйсен тӗрлӗ сӑлтавӗсене кӑларса тӑраҫҫӗ, тенӗ Вышинский.

Англипе Америка блокӗ Хӑрушсӑрлӑх Советӗнче ыйтусене пурте пӗр сасӑ пулса решени йышӑннине тата памалли принципа (вето правине текенскере) критикӑлани пирки Вышинский уйрӑмах чарӑнса тӑнӑ. Атлантика блокӗн членӗсем пур пысӑк ыйтусене татса парас ӗҫре те хайсем хушшинче пӗр саслӑ пулса решени йышӑнас принципа тытса пыраҫҫӗ, тенӗ. Вышинский вара Европа совечӗ статутӗнчен, Ҫурҫӗр Атлантика пактӗнчен, «Шуман планӗ» пирки тумалли договорӑн проектӗнчен тата ытти документсенчен тивӗҫлӗ вырӑнсене—пур ыйтусене те пӗр саслӑ пулса решени йышӑннипе тата памалли ҫинчен калакан вырӑнсене—илсе кӑтартнӑ. Ку вара комитет членӗсене тата йышлӑ халӑха уйрӑмах хытӑ шухӑшлаттарнӑ.

Хайӗн сӑмахне вӗҫлес умӗн Вышинский СССР делегацийӗ тӑратнӑ резолюци проекчӗ ҫинчен тӗплӗ каласа панӑ. Вӑл Хӑрушсӑрлӑх Совечӗн ларӑвӗсене вӑхӑтран вӑхӑта йӗркелӗ пухма тата коллективлӑ мерӑсем йышӑнас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитета салатса ярасси хирӗҫ Ачесон калани, ҫавӑн пекех Америка, Англи, Франци тата ытти хӑшпӗр делегацисен калаҫӑвӗсем пӗтӗмпех тӗрӗс мар пулнине Вышинский кӑтартса панӑ.

Вышинский хыҫҫӑн США представителӗ Коэн сӑмах илнӗ. Вӑл СССР делегацийӗн пуҫлӑхӗ кӑларса тӑратнӑ сӑлтавсене хирӗҫ ответлеме пачах тӑрӑшман. Коэн питех те сӗмсӗр тата айванла сӑмахсем каласа тултарнӑ. Вӑл историри фактсене питех те кивсерӗрен пӑсса, тӗрлӗ тӗслӗхсем илсе кӑтартма хӑтланнӑ. Вӑл Совет Союзне хирӗҫ тем те пӗр суйса каланӑ, Геббельс пропаганди пекех суйса элекленӗ.

Ларӑва хупас умӗн Политика комитечӗн председателӗ январӗн 8-мӗшӗнчи ирхи ларура комитет резолюци проекчӗсем тата унта кӗртме сӗннӗ тӳрлетӳсем пирки сасӑлама тытӑнасси ҫинчен пӗлтернӗ.

Васкаса хӗҫпӑшал нумай хатӗрленинчен кам пуять

Англи монополисчӗсем пысӑк услам илнӗ

ЛОНДОН, январӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Васкаса хӗҫпӑшал нумай хатӗрленӗ пирки Англири ӗҫлекенсен пурнӑҫӗ питӗ начарланать, ҫав вӑхӑтрах Англи монополисчӗсем нумайӑш та нумайӑш услам илеҫҫӗ, пуйса пыраҫҫӗ.

«Файненшл таймс» хаҫат пӗлтерни тӑрӑх, 1951 ҫулта хайсен ҫулталӑкри финанс отчечӗсене пичетлесе кӑларнӑ 3.787 компанин пӗтӗм усламӗ иртнӗ ҫулта 1.874 миллион фунт стерлинга ҫитнӗ, унчченхи финанс ҫулӗнче вӗсем пӗтӗмпе 1.432 миллион фунт стерлинг услам илнӗ пулнӑ.

Стратегилле чӗртаварсем хатӗрлес тӗлӗшпе ӗҫлекен компанисем уйрӑмах питӗ пысӑк услам илнӗ. Ҫапла, каучук хатӗрлекен компанисен усламӗ 331 процент, нефть компанийӗсен—54 процент, тӑхлан, пӑхӑр тата ытти тӗслӗ металсем хатӗрлекен компанисен усламӗ 67 процент ытла ӳснӗ.

Правительствӑн ҫар заказӗсене пурнӑҫлакан компанисем: машинӑсем, моторсем тӑвакан предприятисен, авиаци тата металлурги компанийӗсен нумайӑшӗ хайсен усламӗсене 30 процент ытла ӳстернӗ.

Хӗвеланӑҫ Германире Америка шпионӗсен ҫӗнӗ организацийӗ тунӑ

БЕРЛИН, январӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑн Майн ҫинчи Франкфуртри генеральнӑй консульстви ҫумӗнче «Американ информаци службӗ» текенскерне тунӑ. Ку вӑл—Америка агенчӗсемпе шпионӗсен организацийӗ пулнӑ. Ку центр Гессен ҫӗрӗн кантурӗсене ертсе пырать тата Рейнланд-Пфальц ҫӗрӗн пӗр пайӗнче ӗҫлесе тӑрать. Кун пек центрсем Хӗвеланӑҫ Германире 15 тума палӑртнӑ. Вӗсене Берлин, Ганновер, Кассель, Кобленц, Штутгарт, Бремен хулисенче тата ытти хуласенче тӑваҫҫӗ.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Бонри корреспонденчӗ Дрю Миддлтон: ҫак агентсемпе шпионсен кантурӗсене США ют ҫӗршывсенче тунӑ организацисенчен чи пысӑккисем пулать, тесе каланӑ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те тӑшмана хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ, Америкӑпа Англи интервенчӗсен тата Ли Сын Ман ҫарӗсен салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтереҫҫӗ.

Ӗнер Халӑх ҫарӗн чаҫӗсем хӗвеланӑҫӗнчи сыран ҫывӑхӗнче тӑшманӑн икӗ карапне шыва путарнӑ, унччен ҫав карапсем сыранри халӑх пурӑнакан район ҫине тупӑсемпе нумай пенӗ пулнӑ.

Ӗнер Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтакӗсем тӑшманӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ, 2 самолетне сиен кӳнӗ, унччен ҫав самолетсем Корейӑн хӗвелтухӑҫӗнчипе хӗвеланӑҫӗнчи сыранӗсенчи мирлӗ халӑх пурӑнакан хуласемпе ялсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ ҫӗре хутшӑннӑ пулнӑ.

Америка авиацийӗ Китая хирӗҫ ҫӗнӗрен агрессиллӗ ӗҫсем тӑвать

ПЕКИН, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Аньдун хулинчен ҫапла пӗлтерет:

Корейӑри перемири ҫинчен пыракан калаҫӑва американецсем ӳриех вӑраха тӑсаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра, 1951 ҫулхи декабрь уйӑхӗнчи юлашки кунсенче, Америка авиацийӗ Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китай ҫине темиҫе хутчен те ҫӗнӗрен вӗҫсе кӗнӗ, унта бомбӑсем пӑрахнӑ тата пулеметсемпе пенӗ.

Декабрӗн 26-мӗшӗнче 18 сехетре Америка самолечӗ Аньдунран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри Дадунгоу ҫине вӗҫсе пынӑ, унта ҫутатакан бомба пӑрахнӑ. Кун хыҫҫӑн ҫак самолет Бэйцинцзе ҫинче вӗҫсе ҫӳренӗ, унта шоссе ҫулӗн икӗ енне фугаслӑ 4 бомба пӑрахса хӑварнӑ. Пӗр бомба Бэцинцзерен 3 километр хӗвелтухӑҫнерехре ӳкнӗ. Ҫавна пула 8 ҫын (виҫӗ хӗрарӑм тата пилӗк арҫын) аманнӑ, 5 ҫурт арканнӑ тата 2 мул (лаша пек выльӑх) вилнӗ.

Декабрӗн 31-мӗшӗнче 18 сехетре тӑшман бомбардировщикӗ Тандинкоуран 2 километр хӗвелтухӑҫнерехри вырӑнта бомба пӑрахнӑ тата пулеметпа пенӗ. Ҫав кунах 18 сехет те 38 минутра тӑшман самолечӗ Дагушань ҫине вӗҫсе пынӑ, Дагушаньрен хӗвеланӑҫнерехри вырӑна бомба пӑрахса хӑварнӑ. Бомба ҫурӑлнипе 5 ҫын аманнӑ, 14 ҫурт арканнӑ. Самолет 18 сехет те 45 минутра вӗҫсе кайнӑ.

ПЕКИН, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Аньдунран ҫапла пӗлтерет:

Ӗнер Америка сывлӑш-ҫар вӑйӗсен самолечӗсем Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китай ҫине ҫӗнӗрен вӗҫсе пынӑ, унта бомбӑсем пӑрахнӑ.

Январӗн 6-мӗшӗнче 14 сехет те 53 минутра Америкӑн «Ф-84» йышши 8 самолечӗ Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китай ҫине вӗҫсе пынӑ, Ляолун провинцийӗнчи Цзиань уезчӗ ҫинче вӗҫсе ҫӳренӗ, унта 14 бомба пӑрахса хӑварнӑ (3 бомби ҫурӑлман). Цзиань хулинчи чугун ҫул станцийӗ ҫине 11 бомба пӑрахнӑ. Ҫавна пула 3 железнодорожнике амантнӑ, чугун ҫула 370 метр тӑршшӗ аркатнӑ тата тӗрлӗ материалсене пӗтерсе тӑкнӑ.

Ҫав кунах 15 сехет те 07 минутра самолетсен ҫав ушкӑнӗ Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китай чикки урлӑ тепӗр хут вӗҫсе каҫнӑ, Куаньдянь уездӗнчи Шичжупу текен пункт ҫинче вӗҫсе ҫӳренӗ, унтан Корея еннелле каялла вӗҫсе кайнӑ.

Фашиста хӳтӗленине хирӗҫ протестлесе забастовка ирттернӗ

ВЕНА, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Административнӑй ӗҫсене пӑхса тухакан суд хеймвер (фашистла ҫар ҫыннисен организацийӗн) пуҫлӑхӗ, Австрири рабочи класӑн палачӗ пулнӑ Штаремберга хӑйӗн пурлӑхне каялла тавӑрса пама решени йышӑннӑ. Суд ҫавӑн пек решени йышӑннине хирӗҫ протестлесе паян ирхине пӗтӗм Австрире кӗске вӑхӑтлӑх забастовкӑсем пулса иртнӗ.

Вена хулинче ирхине 9 сехет те 50 минутран пуҫласа 10 сехетчен—10 минут хушши—трамвайсем, метропоездӗсем тата автобуссем пачах ҫӳремен.

Австри столицийӗнчи пысӑк предприятисенче, Штадлау, Флоридсдорф, Фаворитен текен промышленноҫлӑ районсенче суд решенине хирӗҫ протестленӗ ятпа митингсемпе пухусем пулнӑ. Пухӑва пынисем Австрири рабочи класс тӑшманӗн пурлӑхне каялла тавӑрса парасси ҫинчен йышӑннӑ решение пӑрахӑҫлама ыйтса резолюцисем йышӑннӑ.

Унтан Венӑри нумай предприятисенчи рабочисем хула центрне кайнӑ. Унта парламент умӗнчи площадьре ҫав решение хирӗҫ протестлемелли митинг пулнӑ. Митинга Венӑри темиҫе пин ӗҫҫынни пухӑннӑ.

Митингра Австрири коммунистсен партийӗн центральнӑй комитечӗн политбюро членӗ Хоннер тата Австрири социалистсен рабочи партийӗн председателӗ Шарф сӑмах тухса каланӑ. Фашизма ҫӗнӗрен ҫӗклентернине хирӗҫ кӗрешме Австрири рабочи класӑн пӗрлӗхне ҫирӗплетес пулать, тенӗ вӗсем.

Моника Фелтон саламлӑ ҫырусем нумай илет

ЛОНДОН, январӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Паллӑ обществӑллӑ деятельница Моника Фелтон ӑна «Халӑхсем хушшинчи мире ҫирӗплетнӗшӗн» паракан тӗнчери Сталинла премипе 1951 ҫулшӑн награждӑланӑ ятпа саламлӑ ҫырусем нумай илет.

«Дейли уоркер» хаҫат корреспонденчӗпе калаҫнӑ чухне Моника Фелтон вӑл халиччен палламан ҫынсенчен телеграммӑсемпе ҫырусем нумай илни ҫинчен пӗлтернӗ. Уй патне Нью Касл хулинчен килхуҫи-хӗрарӑмӗ Элизабет О'Бири ҫыру янӑ. Вӑл ҫав хулари хӗрарӑмсен ячӗпе: «Пӗтӗм тӗнчери миллионшар рядовой ҫынсем, уйрӑмах ача амӑшӗсем, сирӗн ята яланах хисеплесе тата юратса асӑнӗҫ, вӗсем тӗрлӗ политикӑллӑ партисен руководителӗсене, чиркӳ служителӗсене тата ытти паллӑ ҫынсене мирпе тӗрӗслӗхе хӳтӗлесшӗн сирӗн пек кӗрешменшӗн питлӗҫ», тесе ҫыратъ. Совет Союзӗнчи, халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи тата Китай Халӑх Республикинчи профсоюзсен организацийӗсемпе хӗрарӑмсен организацийӗсем саламлӑ ҫырусем янӑ.

Январӗн 3-мӗшӗнче Моника Фелтон Корейӑри хӗрарӑмсен руководительницинчен Пак Ден-айран саламлӑ телеграмма илнӗ. Вӑл хӑйӗн телеграмминче пӗтӗм тӗнчери мире юратакан халӑхсем ҫӗнтересси шанса тӑни ҫинчен пӗлтернӗ.

Китай халӑхӗн мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен комитечӗ Моника Фелтон патне янӑ ҫырура: «Пӗтӗм тӗнчери миршӗн кӗрешес ӗҫре эсир пысӑк ҫитӗнӳ тӑвассине эпир шанса тӑратпӑр, сире тата Англи халӑхне тулли кӑмӑлпа хисеплени ҫинчен пӗлтеретпӗр», тесе ҫырнӑ.

«Дейли уоркер» хаҫат корреспондентне ҫав ҫырусем ҫинчен каласа кӑтартса, Моника Фелтон: «Ҫавӑн пек ҫырусем илнипе эпӗ тулли кӑмӑлпа хавасланатӑп. Ку вӑл—мана ҫӗнӗ вӑй-хӑват паракан тата хавхалантаракан ҫӑлкуҫӗ», тенӗ.

Германири коммунистсен партийӗн центральнӑй правленийӗн виҫҫӗмӗш пленумӗ

БЕРЛИН, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Дуйсбургра Германири коммунистсен партийӗн центральнӑй правленийӗн виҫҫӗмӗш пленумӗ пулнӑ. Пленума Макс Рейман председатель пулса ертсе пынӑ.

АДН агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, пленумра Германири коммунистсен партийӗн председателӗ Макс Рейман доклад тунӑ. Вӑл Америкӑпа Германи империалисчӗсем нимӗҫсен ҫӗршывне васкасах вӑрҫа хатӗрлесе ҫитерес тӗлӗшпе программа хатӗрлени ҫинчен, ку программӑна Шуман планне ҫирӗплетесси, пӗтӗмӗшле договор пирки тата ун ҫумне хушса тумалли килӗшӳсем пирки калаҫусем ирттересси, пурте ҫар службинче пулмалли йӗрке тума хатӗрленесси тата Аденауэр правительстви Германири коммунистсен партине чарса лартас пирки панӑ сӗнӳ кӗни ҫинчен каласа панӑ.

«Хӗвеланӑҫ Германие Европӑри вӑрҫӑн тӗп бази туса хумалли программӑна пурнӑҫлас шутпа Германири коммунистсен партине чарса лартма хатӗрленеҫҫӗ, ҫапла вара Хӗвеланӑҫ Германири патриотла вӑйсене хытӑ ҫапса аркатма шанаҫҫӗ, — тенӗ Рейман.—1933 ҫулта Гитлер та тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫа хатӗрленес ӗҫе коммунистсене, унтан вара Германири ирӗклӗхе юратакан мӗнпур ҫынсене хӗсӗрленинчен пуҫласа ячӗ. Аденауэрпа Лер политикине хирӗҫ халӑх мӗн чухлӗ хытӑрах тӑрать, вӗсем ҫавӑн чухлӗ хытӑрах терорла ӗҫсем тума, управлени ӗҫӗсене фашистла меслетсемпе туса пыма тытӑнаҫҫӗ».

Ҫавна пула Хӗвеланӑҫ Германири мӗнпур патриотсемшӗн тата мире юратакан мӗнпур ҫынсемшӗн пысӑк хӑрушлӑх тухса тӑрать. Уйрӑмах Германири коммунистсен партине чарса лартас тӗлӗшпе пысӑк хӑрушлӑх пуррине шута илмесӗр тӑма юрамасть. Коммунистсен партине чарса лартма шутланине нимӗҫ халӑхӗн сирсе ярас пулать. Ку ӗҫе демократиллӗ правӑсемпе ирӗклӗхсене пӗтерсе лартас шутпа, Германие ҫӗнӗрен мирлӗ пӗрлештерме тата ӑна мирлӗ аталанма чарас шутпа тума хатӗрленеҫҫӗ. Нимӗҫ халӑхӗн Германири коммунистсен партине чарса лартма памалла мар. Ҫапла вара, вӑрҫӑ пуҫарассипе интересленекенсене—наципе демократи тӑшманӗсене пурне те халӑхӑн ҫапса аркатас пулать.

Германири коммунистсен партине чарса лартма Бонри правительствӑн шалти ӗҫсен министрӗ Лер сӗнӳ панӑ. Ҫавна хирӗҫ конституци тӗлӗшпе ӗҫлекен федеральнӑй суда пама ответ проектне хатӗрленӗ. Ку проект ҫинчен Макс Рейман тӗплӗ каласа панӑ. Германири коммунистсен партийӗ ку ответра: Аденауэр правительстви конституцие пӑсать тата фашистла меслетсемпе пуҫ пулса тӑма тытӑнать, тесе калать.

«Аденауэр правительствине хирӗҫ тӑракан кашни ҫынна Лер конституци тӑшманӗ пек кӑтартма хӑтланнинчен ҫакӑ курӑнать: Аденауэрпа Лер хӑйсем вӑрҫа хатӗрленмелли политикине хирӗҫле кирек мӗнле оппозицие те путарса лартма тӑрӑшаҫҫӗ,— тенӗ Рейман.— Германири коммунистсен партийӗн центральнӑй правленийӗн отвечӗ вӑл влаҫсен халӑха хирӗҫле, ҫӗршывӑн тӗрлӗ пайӗсене пӗрпӗринчен уйӑрас тата вӑрҫа хатӗрленес политикине хытӑ айӑплакан документ тата халӑха тӑшманла Аденауэр правительствине сирпӗтсе антарассишӗн пӗтӗм наци кӗрешес ӗҫре ҫивӗч хӗҫпӑшал пулса тӑрать».

Рейман доклачӗ хыҫҫӑн пленум пурте пӗр саслӑ пулса конституци тӗлӗшпе ӗҫлекен федеральнӑй суда памалли ответ проектне ҫирӗплетнӗ. Ку ответа Лер Германири коммунистсен партине чарса лартма сӗннине хирӗҫ тӑратаҫҫӗ. Пленум конституци тӗлӗшпе ӗҫлекен федеральнӑй судра партин полномочнӑй представителӗсем пулма Германири коммунистсен партийӗн председательне Макс Реймана тата федеральнӑй парламентӑн депутачӗсене Гейнц Раннера тата Вальтер Фиша уйӑрнӑ.

Плевен правительстви вырӑнтан тухнӑ

ПАРИЖ, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Наци пухӑвӗнче Рене Плевен правительствине шанмалла-и е шанмалла мар тесе сасӑланӑ. 341 депутат правительствӑна шанас мар тесе сасӑланӑ, правительство майлӑ 243 депутат сасӑланӑ. Сасӑланӑ хыҫҫӑн Плевен пӗр тӑхтаса тӑмасӑр хӑйӗн правительстви вырӑнтан тухни ҫинчен пӗлтерекен хута Ориоль президента панӑ. Плевен правительстви влаҫра 5 уйӑх та тытӑнса тӑрайман.

Плевен правительстви вырӑнтан тухнин сӑлтавӗ ҫакӑн пек: правительство тӑвакан ӗҫсем халӑхӑн аслӑ массисене хытӑ тарӑхтарнӑ. Правительство политикине сӳйлавҫӑсем ырламаннинчен парламентра ытларахӑшӗ пулса тӑракан реакционерсен чылай ушкӑнӗсем хӑраса ӳкнӗ, ҫавӑнпа та вӗсен хальхинче, асӑннӑ политикӑна яланах тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пыракан коммунистсем хыҫҫӑн, правительствӑна шанассине хирӗҫ сасӑлама тивнӗ.

Плевен влаҫра нумай мар вӑхӑт хушши тӑнӑ. Ҫав вӑхӑт Плевен правительстви Франциe тата та ытларах США империализмне пӑхӑнтарас тӗлӗшпе чылай ӗҫсем тунипе паллӑ пулса тӑнӑ. Ҫав ӗҫсен шутне Франци территорине Америка оккупацилесси вӑйланни, Францин ҫӗр кӑмрӑкӗпе металлурги промышленноҫне хӑрушлӑх умне ҫитернӗ «Шуман планне»—питӗ киревсӗр плана—Наци пухӑвӗнче ҫирӗплетни, Хӗвеланӑҫ Германи милитаризмне ҫӗнӗрен ҫӗклентернине витсе пытантарас шутпа кӑна мар, тата Францие Хӗвеланӑҫ Европӑри ытти ҫӗршывсен никама пӑхӑнмасӑр пурӑнмалли прависене вӑйлӑн ҫапса аркатас шутпа тума палӑртнӑ «Европа ҫарӗ» текенскерне тӑвас пирки калаҫса татӑлма хытӑрах тӑрӑшма тытӑнни кӗрессӗ.

Юлашки эрнесем хушшинче Плевен правительстви Францин гражданла экономикине питӗ хытӑ тапӑннӑ. Вӑл Вьетнамри вӑрҫа малалла тӑсма, ҫавӑн пекех тата агрессиллӗ Атлантика блокӗн программи тӑрӑх васкасах хӗҫпӑшал нумай хатӗрлеме ҫар расхочӗсене питӗ нумай ӳстерешшӗн пулнӑ. Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх 1951 ҫулхи бюджетра ҫар валли 470 миллиард франк расходланӑ пулсан, ку расходсене 1952 ҫулта Плевен, Вашингтон хушнӑ тӑрӑх, 1.160 миллиард франка ҫитерме, чӑннипе вара 1.500 миллиард франка ҫитерме йышӑннӑ.

Ҫав тери пысӑк ҫар расхочӗсене витме укҫа тупма Плевен халӗ пухакан налогсене ӳстерме тата ҫӗнӗ налогсем хума, халӑх нушисене витме нихҫанхинчен те сахалтарах укҫа-тенкӗ пама йышӑннӑ. Ҫав шутпа вӑл хӑйне евӗрлӗ экономикӑллӑ диктатура туса хума тӑрӑшнӑ. Ку тӗлӗшпе вӑл правительствӑна парламента пӗлтермесӗрех чугун ҫулсене тытса тӑма тата социальнӑй ӗҫсем валли памалли укҫа-тенке чакарма ирӗк паракан «пӳлмелли законсем» текенскерсене йышӑнтарасшӑн пулнӑ.

Ҫӗнӗ йышши налогсем пухмалли тата гражданла промышленноҫӑн ӗҫне чакармалли финанс законне ҫирӗплеттересшӗн пулса, Плевен правительствӑра кризис пулассипе хӑратма хӑтланнӑ. Вӑл правительствӑна шанасси ҫинчен ыйту лартнӑ, ҫавӑн пек хӑратса хӑйӗн планӗсене пурнӑҫлама тӑрӑшнӑ. Январӗн 4-мӗшӗпе 5-мӗшӗнче Плевен финанс законӗ проекчӗн тӗрлӗ статьисене сӳтсе явнӑ чухне правительствӑна шанассипе шанас марри ҫинчен 8 хутчен ыйту лартнӑ.

Паян Наци пухӑвӗн правительствӑна шанас ыйтупа 8 хутчен умлӑ-хыҫлӑ сасӑлама тивнӗ. Анчах пӗррремӗш ыйтупа—«чугун ҫулсен нациллӗ обществине урӑхлатса ҫӗнетесси ҫинчен» текен ыйтупа—сасӑланӑ чухнех Плевен поражени тӳснӗ. Ку ыйтура вара чӑннипе Франциpи чугун ҫулсене уйрӑм капиталистсен аллине памалли, вӗсене тытса тӑма тухакан памалли расходсене чакармалли ҫинчен каланӑ. Халиччен сылтӑмри социалистсем нихӑш майлӑ та сасӑламасӑр Плевен правительствине кашнинчех ҫӑлса хӑварнӑ пулсан, хальхинче вӗсем ӗлӗкхи тактикӑна тытса пыма пултарайман. Вӗсен суя ӗҫ туса халӑха улталас шутпа правительствӑна хирӗҫ сасӑлама тивнӗ, ҫакӑ вара правительство кун-ҫулне татса панӑ.

Коммунист-депутатсемпе пӗрле парламентри реакционерсем те нумайӑшӗ Плевен правительствине хирӗҫ сасӑланӑ. Ҫакӑнтан Франципе влаҫра тӑракан партисен реакциллӗ блокӗ ӑшӗнче хирӗҫӳсем пурри курӑнать.

Вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен работниксен семинарӗ

Нумаях пулмасть Шупашкарта хула Совет исполкомӗсемпе райсовет исполком председателӗсен вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен заместителӗсен вунӑкунлӑх семинарӗ пулса иртнӗ.

Семинарта Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗ И. Афанасьев юлташ, Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗсем М. Андреевпа М. Репкин юлташсем, Чӑваш АССР Госплан ответлӑ работникӗсем, Госбанк кантурӗн специалисчӗсем, педагогика институчӗн преподавателӗсем политикӑллӑ тата экономикӑллӑ ыйтусем тӑрӑх лекцисем вуласа панӑ.

Колхозсенчен пӗлтереҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Гигант» колхоз ҫӗрӗ ҫинче торф пур. Колхоз правленийӗ кашни уй-хир бригадине 100-шер тонна торф кӑларма задани панӑ. Чылай бригадӑсем торф хатӗрлеме тытӑннӑ.

Колхоз кӑҫал 90 тонна минераллӑ удобренисем кӳрсе килет. Уй-хире тислӗк нумай кӑларнӑ. 540 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ.

Г. ПАВЛОВ.

ЙӖПРЕҪ. «Красный фронтовик» колхозра хура тилӗ ферми организациленӗ. Фермӑна 5 тилӗ илсе килнӗ. Вӗсене пӑхса усрама И. Микишов колхозника уйӑрнӑ.

А. ТИМОФЕЕВ.
Р. ЕГОРОВ.

ШӐХАСАН. Шӗкӗрти Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз ҫуракине тимлӗ хатӗрленет. Колхозниксем хирте 600 гектар ҫинче юр тытрӗҫ, вырӑнти удобренисем хатӗрлеҫҫӗ. Вӑрлӑхсене пӗтӗмпех сортласа тасатнӑ.

Н. Захаров тимӗрҫӗ плугсемпе сеялкӑсене тата сӳресене юсаса пӗтерчӗ, молотилкӑсем юсама тытӑнчӗ.

В. ВЕСЕЛОВ.
Н. АЛЕКСАНДРОВ.

Чӗртаварсемпе материалсене перекетлеҫҫӗ

УЛАТӐР. Хулари промышленность предприятийӗсенче чӗртаварпа материалсене перекетлессишӗн кӗрешӳ анлӑ сарӑлса пырать. Иртнӗ ҫулта хулари предприятисемпе артельсем 514.079 тенкӗлӗх тӗрлӗ материалсем тата чӗртавар перекетленӗ, вӗсенчен 900.157 тенкӗлӗх продукци туса кӑларма пулать.

Перекетлӗхшӗн кӗрешесси уйрӑмах атӑ-пушмак фабрикинче анлӑ сарӑлнӑ. Кунта кашни тӑваткал сантиметр тирсӑрана перекетлеме тӑрӑшаҫҫӗ. Пӗлтӗр фабрика коллективӗ 126.300 тенкӗлӗх тир-сӑран перекетлесе планран ирттерсе пилӗк пин мӑшӑр ытла атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларнӑ.

Хулари промкомбинат коллективӗ перекетлесе хӑварнӑ чӗртавартан кӑна 132 пин тенкӗлӗх йӗлтӗр туса кӑларнӑ.

Н. АННЕНКОВ.

Перекет кассинче

СОВЕТСКИ. Районти перекет кассинче вкладчиксен хисепӗ ҫулсеренех ӳссе пырать. 1952 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне, вӑрҫӑ чарӑннӑ ҫулхипе танлаштарсан, вкладсен сумми икӗ хут ытла ӳснӗ. Ку вӑл районти ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ ҫулсеренех лайӑхланса пынине лайӑх кӑтартса парать.

Центральнӑй перекет касси 1951 ҫулта ӗҫҫыннисенчен вклад илмелли плана 215 процент ытла тултарчӗ.

Перекет касси ялсенче справкӑсем памалли 21 сӗтел организациленӗ. Унта заем облигацийӗсем ҫине выляв укҫи тухнине тӗрӗслеҫҫӗ. Перекет касси 1951 ҫулта заем облигацийӗсем тӑрӑх 333 пин тенкӗ ытла выляв укҫи тӳленӗ. Вӑл шутран 10 пин, 5 пин тата 1.000 тенкӗлӗх вылявсем те пулнӑ.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Тӳрлетни

«Чӑваш Коммунин» январӗн 8-мӗшӗнче пичетленсе тухнӑ номерӗнчи 3-мӗш страницӑра «Заочниксен пухӑвӗ» ятлӑ заметкӑра (иккӗмӗш абзац): «...заочниксем иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче мӗнле вӗренни тата 1951—1952 вӗренӳ ҫулӗнчи задачӑсем ҫинчен доклад турӗ» тесе вуламалла.

Пӗлтерни

Январӗн 9-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» пӗррремӗш ҫул вӗренмелли кружок руководителӗсен семинарӗ пулать. Тема: «Ленинпа Сталин большевиксен партийӗн теориллӗ никӗсӗсене туса хатӗрлени».

* * *

Январӗн 9-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсемпе усӑ курса пӗррремӗш ҫул вӗренекен кружок руководителӗсене валли лекци пулать. Лекци теми: «Большевиксен партийӗн теориллӗ никӗсӗсем».

Лектор—П. М. Михайлов юлташ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

Ответлӑ редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00906 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.